4162 41-263

УХСАЙ ЯККĂВĔ

# ЯЛ ХЫПАРĔСЕМ

САВĂСЕМ



ЧАССР ГОСУДАРСТВО ИЗДАТЕЛЬСТВИ
ШУПАШКАР ◆ 1941

УХСАЙ ЯККĂВĔ

# ЯЛ ХЫПАРĔСЕМ

САВĂСЕМ

ЧАССР ГОСУДАРСТВО ИЗДАТЕЛЬСТВИ
ШУПАШКАР 1941

# I

# ЯЛ ХЫПАРЁСЕМ

ЧУВАШСКАЯ
КНИЖНАЯ ПАЛАТА
гор. Чебоксары Чувашской АССР

## АШШЕПЕ ЫВĂЛĔ

Сĕм хура та тискер кутамас вăрмансем
Виçĕ кун, виçĕ каç ухлатса ахăрчĕç.
Илтĕнмерĕç ниçта кайăксен юррисем.
Ёнчĕ пек таса юн тăпрана сăрхăнчĕ.
Тупăсем çулăм пек ярăна-ярăна
Вирт* яраççĕ сĕм-сĕм вăрмана, йăрана.

Ахрат варĕ хăйне хăйраман çĕçĕпе
Пуснă пек йăнăшрĕ виçĕ кун, виçĕ каç.
Шарапнель лекнипе пушăтне кĕпе пек
Хыврĕ те турпасланчĕ аманнă çăка.
Пурнăç-тăвăл пулсан, этем уншăн юман.
Кĕрешÿ—аксиома, а тамăк—юмах.

Паян кун юмахри ăçтаха сасси мар,—
Укнĕ тупă татать юмансен тымарне.
Вăрманта шăхăрса, ялкăшса вут-кăвар
Тăлпалать çĕмĕртсен çеçкери сурпанне.
Çын вилет. Тĕнче—çулнă, çаратнă çаран.
Эпир ешĕл каю пек ÿсетпĕр ялан.

* Вут пенине вирт, теççĕ.

Хӗвел тухрӗ, чӗре пек сарать тымарне,
Хӗвел юнлӑ чӗре пек йӑванчӗ ҫӗре.
Ҫавраҫил кустарать тусансен юпине.
Вӗри ҫил питсене ҫапӑнса пӗҫерет.
Ывӑлне салтака ӑсатан амӑш пек
Ҫил ҫӳрет, йӑнӑшса макӑрать кунӗпе.

Малалла ҫӗмӗрсе, кар тӑрса кайнӑҫем
Сайралать, сайралать теветкел батальон.
Шыв сыпма вӑхӑт ҫук. Тӗлӗрмест пӗр этем.
Малалла! Малалла! Таптӑр-ха паттӑр юн.
Ҫумасть ҫӑмӑр. Ҫӑвать чунилешшӗ етре.
Ялсем мӑкӑрланаҫҫӗ ҫунса инҫетре.

Тӑват кун та иртет. Тӗтӗмлӗ ирхине
Тин тарать сехремет, ҫӗр ҫӑтманӗ тӑшман.
Такансен айӗнчен вут та хӗм сирпӗнет.
Тӑшман ҫарӗ тарать, халӗ ҫук туртӑшма.
Кукӑрӑлнӑ хӗҫ пек уйӑх та тӳпере.
Тӑрӑ ҫил вӗркелет, пите хирӗҫ перет.

Ҫӑлтӑрсем сассӑр ванчӗҫ ҫӳлте, пуҫ ҫинче.
Тар шӑрши саланать, ирӗлет сывлӑшра.
Йывӑҫсен тенкисем кӗвӗлеҫҫӗ ҫинҫен.
Хӑпарать шинель тӗслӗ тӗтре ҫырмаран.
Шурӑмпуҫ каҫӑр ту ҫамкине ҫапӑнсан,
Таврӑнчӗ суранланнӑ пӗччен партизан.

Урамсен айккипеччӗ, йӑмралӑ ялта,
Пӗлӗте хупласа кар-карлатчӗ курак.

Вут персе, çунтарса мăшкăллана йăлтах,
Кунтан иртнĕ ĕнер иртĕхнĕ вăр-хурах.
Çулĕнче типтĕр шыв, тата курăк хăртăр!
Виллисен шăмми витĕр çĕлен шăхăртăр!

Пуç усать партизан. Çуннă ял кĕлленет.
Ённĕ шăршă перет. Вут нихçан çывăрмасть.
Ăçта хурĕ этем ăшĕнчи çиллине,—
Ту йăтаймĕ ăна, сивĕтеймĕ çырма.
Йăмрасен тăрринче ял-йышсен виллисем
Хуралса кар тăраççĕ çилпе силленсе.

Партизан кăкăрĕ арманчуль йăтмалла.
Алтăр пек куçĕнче кăвак пĕлĕт шăвать.
Ывăçне хутăр та, чăмăртатăр чула,—
Çăнăхлатĕ ăна. Кăкăрне сап шывпа,—
Шыв пăсланĕ. Кервен хулĕнчи вăй-хăват
Хурама йывăçран хитре пĕкĕ авать.

Кĕл пулса çилпе вĕçнĕ кил-çурт умĕнче
Партизан, тĕлпулса хăй тăван ывăлне,
Куçĕнчен пăхса илчĕ, умне ӳпĕнчĕ,
Çумĕнчи хăй хĕçне, çӳрен ут йĕвенне
Пачĕ те, кăмрăкланнă каска çийĕнче:
Пиллесе калаçма хĕрĕнсе тытăнчĕ:

„Ывăлăм! Эп кăларнă хуса ирхине
Тусанпа витĕннĕ кĕтĕве хирсене,
Ёренпур пăхăрçи тунă йĕс шăхличе
Шăхăртса хĕпĕртеттĕм вăрман ăшĕнче,

Ăшăмра çилленсе варкашатчĕ юнав:
Тăшманпа çапăçса хăпартасчĕ юча!

Çитрĕ вăхăт вара. Тăшмана пĕтерме
Эп туптарăм, хăйрарăм юратнă хĕçе.
Тăшмана хам умри çул çинчен ирттермен,
Эп ваклана ăна, таткаланă веçех.
Эп йĕнер çийĕнче çыврăнă каçсенче,
Вилĕм кĕтнĕ пире çĕршыври çулсенче.

Пичет пек пусăннă ман ура йĕрĕсем
Мишавай виçейми Уралти хирсенче.
Çулла—ăшă çилсем, хĕлле - сивĕ çилсем
Шăхăрса ахăрнă манăн пуç çийĕнче.
Астăвать мана шурлăх та шавлă вăрман,
Эп шывра та путман, эп вутра та çунман.

Çавраçил таврана чĕтретсе кисретмен,
Талпăнса тапăнатчĕ ылханлă тăшман,
Çиçĕм пек ялтăратчĕç хĕçсем пур енчен:
Эпир тухнă куçа куç тăрса тавлашма—
Кăранклаттăр çăхан виллисем çийĕнче.
Ылханса мăян ӳстĕр вĕсен чĕринчен.

Çĕлен пек авăнатчĕç вĕсен ӳчĕсем,
Вут сирпĕтетчĕ тăвата такан.
Йĕрĕнчĕк тумĕсем йăлтăр çутă вĕсен,
Йĕнерсем—кĕççерен, пакунсем—ылттăнтан.
А пирте çăпата, çĕтĕк-çатăк сăхман,
Эпир пур-пĕр нихçан та пĕтмен те чакман

Пакунпа хуплас çук тĕрĕслĕх хĕвелне,
Çултăмăр, хиртĕмĕр, тăкрăмăр вĕсене.
Революци тесессĕн, çитет пирĕн юн,
Революци тесессĕн, пĕтет çичĕ ют.
Кăрнатир пек чечен тăшмансен пуçĕсем
Акăнчĕç хирсенче тусанпа витĕнсе.

Эпĕ хамăн телей килеймен ĕмĕрте
Суха хыççăн ирттертĕм кичем кунсене:
Хăшпĕр чух каçсенче кăн-кăвак пĕлĕте
Тарăхса эп пăхаттăм хирте пĕчченех.
Пытараттăм хуйха юрăра, кĕвĕре—
Ĕренпур пăхăрçи тунă йĕс шăхличре.

Асатте такмаклатчĕ авал пĕр юмах:
Пураннă çĕр çинче улăп çын—Пенливан;
Вăл тытсан, ытама кĕреймен ват юман
Тăпăлнă, тарават вăйхалне чăтайман;
Шăрăхра вăл ĕçсен, типсе ларнă çырма;
Пĕр пусса вăл уттарнă çичшер çухрăма.

Вăл сывланă чухне шав-шавланă тĕнче,
Каш-кашланă хура вĕçĕмсĕр вăрмансем.
Канакан çĕрсенче çăпати ăшĕнчен
Тăприне силлесен,—ӳссе ларнă тусем.
Ăнсăртран çыртнă та йайăлти пĕр ӳпре,
Пенливан сирпĕннĕ, ӳтне панă çĕре.

Эсĕ курлă, кашлать ахăрса сĕм вăрман.
Эсĕ курнă мухтавлă хула сăрт çинче.

Инкек килчĕ, —вĕсен ĕмĕрĕ вăрăм мар,
Пĕчĕк шăрпăк тивсен, ялкăшнă вучĕнчен
Тухнă çулăм чĕлхи алхасса вăркăнать,
Кĕл туса вĕçтерет хулана, вăрмана.

Малалла, малалла, малалла пурăнма
Ĕмĕтленетĕм, анчах пĕр пĕчĕк çеç етре.
Кăкăра тирĕнчĕ, çĕмĕрчĕ хулăма.
Чĕнет вилĕм мана сасăсăр нӳр çĕре,
Йыхăрать чĕререн йывăçсем ӳстерме,
Куçсенчен хурчăка чĕпписем вĕçтерме.

Ту çинчен кунталла хăпарать тĕксĕм каç.
Ыран çитĕ. Каллех те хăпарĕ хĕвел.
Ун япшар çуттисем юлашки хут пăхаç,—
Тек вĕсем лăпкаса ăшăтмĕç ман хĕве.
Сӳннĕ куç шăрçинче кăн-кăвак пĕлĕтсен
Ыран вылĕç ирпе карăнса мĕлкисем.

Манран юлмĕ сана тырă тулнă пӳлме,
Чăх вĕçсе каçайми ват хуралтă-хӳме.
Сана юлмĕ канмалăх пуçелĕк-минтер,
Урхамах ут çинче мухтанма чĕн йĕнер.
Юлмĕ ман картаран çăл валакĕ таран
Выльăх-чĕрлĕх,—ăна ĕмĕрте эп курман.

Анчах юлĕ кăвак та йĕм-ешĕл тĕнче,
Шур тĕклĕ акăшсем кӳлĕсем çийĕнче.
Юлать саншăн—кăнтăрла сар хĕвел,
Илсе эсĕ чикеймĕн ăна та хĕве.

Çĕрле—уйăх юлать, салатать çивĕтне,
Анмĕ вăл урамри ват йăмра тăррине.

Хăвaратăп сана çиçĕм пек хĕçĕме
Тăшмана хӳтерсе, вакласа вĕçтерме.
Хăваратăп йĕвен,—лашипе йĕнерне
Тупăн эс çапăçса ху çĕнтернĕ чухне.
Мишавай виçеймен Уралта хирсенче
Кăкăрна ярханах ярăн эс çил çинче.

Эсĕ кай Ахрат варĕ тĕлне вăрмана,
Юлташсем тăракан хӳтĕри вырăна,
Командир патне пыр. Ху аçун пиллĕхне
Варласан, çăхан сăхтăр ылханлă ӳтне,
Аслати ман виле шăтăкне çапăнтăр,
Яланах шăммăм витĕр çĕлен шăхăртăр!

Ман ята варласа эс суя кăмăлпа
Манăн юнăм тумланă çак аслă çулпа
Килĕме таврăнсан, тĕттĕм каç ман мĕлке
Ӳхĕ пултăр унчух, асаппа инкеке
Йыхăрса сан çурту çийĕнче кăшкăртăр,
Сан çуртна вут тивсен, савăнса явăнтăр,
Хытăрах ялкăшма улăмсем вăркăттăр!

Анчах эсĕ аçун пиллĕхне тӳр тытсан,
Мухтаву халăхăн ăсĕнче юлĕ сан,
Эс ăçта та пулин пуç хурсан, сан çинче
Ман тăпра çинчи пек йывăçпа сар чечек
Шăтса ӳсĕ, вара çуркунне ешĕл кун
Ман çинчен сан çине пырĕ юрăç куккук.

Эсӗ сывӑ юлсан, киле килнӗ чухне
Ӑшӑ ҫил пулӑп эпӗ,—вӗркелӗп питне;
Шӑрӑх кун эпӗ тухӑп умна ҫӑл пулса,
Ялтӑрӑп шурӑ чул айӗнчен шавласа;
Ватӑлсан,—тайӑнса утма пулӑп туя;
Тыр аксан,—ҫӑмӑр пулӑп, йӗпетӗп уя.

Эсӗ тухӑн тӗтреллӗ кӑвак ирхине
Тинӗс пек хумханан сарлака хирсене,
Ҫапӑҫнӑ ҫӗрсенче сухаланӑ чухне
Ҫиеле тухакан тӑшмансен шӑммине
Тытса курӑн унта,—ҫакӑн эсӗ ӑна
Кураксен ушкӑнне хӑратма пахчуна.

Харсӑр вилӗм хуплать ман курас тӗнчене.
Тупӑка якатни евӗр сас илтӗнет.
Сывӑ юл, ывӑлӑм! Тыттарсам аллуна,—
Ман ҫилле хӑвна ил пӗтерме тӑшмана.
Хытӑрах чӑмӑрта аллӑма! Ил ӑшша,—
Сивӗре хӗртӗнен кӗртсем тӑрӑх ашса.

Ӗмӗрте хам утса тухайми ҫӗрсенче
Ялкӑштӑр ирӗкри сар хӗвеллӗ тӗнче!—
Тесе эпӗ кӗрешрӗм, хӑвартӑм вӑя,
Ӗмӗтӗм чечеклентӗр, ан кайтӑр сая.
Асанатӑп, ачам... Мана канлӗ выртма
Парӑрсам пӗр хӑлаҫ ҫӗр, тата виҫ хӑма“.

Иртрӗ ҫӗр. Ир килет. Алтӑр ҫӑлтӑр ҫӳлтен
Вылятать аврине. Ак утать пӗр этем.

Шинель тĕслĕ тĕтре хăпарать çырмаран.
Аякра кăн-кăвак курăнать сĕм вăрман.
Хуп-хура вил тăпри, çĕн тăпри сăрт çинче
Пытанать çăраланнă тĕтре ăшĕнче.

*1932—39.*



## ЁПХӲ ПАСАРĔ

Пĕлĕт хушшисенчен хĕвел кăварĕ
Сăртсем çине йăлтăртатса ÿксен,
Юратнă вырăнăм—Ёпхӳ пасарĕ
Кĕрхи мăнтăр пуянлăхпа шавларĕ—
Килеççĕ уйсенчен тулли лавсем.

Мĕн ачаран асра пасар шăв-шавĕ.
Кураттăмăр çынсем тĕркĕшнине;
Итлеттĕмĕр çĕрме пуян мухтавĕ—
Сăрланă пĕкĕри йĕс шăнкăравĕ
Çулсем тăрăх янтранă сассине.

Хаклашнă чух, аллисене сулатчĕç
Пиктеш таврашĕнчи ут вăррисем.
Вĕсен умĕсенче çынсем хăратчĕç,
Пуçне пĕксе йăваш сăнпа тăратчĕç,
Анчах шалта вăркатчĕç чĕрисем.

Каçсем хăрăм пекех йĕпкĕн хураччĕ.
Капан пек вучахсем хирте çунатчĕç.
Эпир лараттăмăр ыйăхласа.

Вăр-хурахсем шик-шăхăрса каятчĕç,
Иртетчĕç козăр туз пек мухтанса.

Кĕтмен çĕртен пăшаллă та чукмарлă
Килсе тухатчĕç кашкăрла вĕсем.
Пирте мĕскер? Суха пуçне тытмалăх
Ĕçчен те шĕпĕнлĕ хăватлă алă,
Лашасенче те пушăт тăлăсем.

Ĕнхӳ пасарĕнче тек кĕçенетчĕç
Пиртен вăрлавă мĕскĕн лашасем.
Вĕсен шăлĕсене пăхса илетчĕç.
Çĕлĕк çавăрайса илсе каятчĕç—
Чăнах аванччĕ пулĕ шăлĕсем!

Ĕренпуртан килсе кăрлай таварĕ
Сутать купса пасарăн варринче.
Епле хитре çӳлти хĕвел кăварĕ!
Ăна сутма майсем килсен—пултарĕ.
Шеллемĕ—тĕттĕм пулĕ çут тĕнче.

Эсир курман-и: икĕ йытă харсăр
Чупать сар тилĕ хыççăн кĕркунне.
Çаплах купсан куç йыттисем канмасăр,
Укçасене йĕрлеççĕ пăрăнмасăр—
Çĕр çăттăр, суккăр тутăр вĕсене;

Шăши кĕсъисене кышлатăр, çуртăр,
Хĕрӳ кăвар çунтартăр вĕсене.
Пирте укçа пулмарĕ. Пушăт пултăр!

Ҫăпатасем сутса шур пурҫăн тутăр
Параттăмăр хура кучҫ хĕрсене.

II

Ĕпхӳ хули пасарĕ урлă-пирлĕ
Иртетĕп хамăн тĕллĕн калаҫса.
Пасар кĕрлет: „Кама мĕскер? Мĕн кирлĕ?“—
Текен сассем унта, кунта та вирлĕ
Шавлаççĕ те ыйтаççĕ ҫут укҫа.

Мĕн кирлĕ? Пиччене ҫухалăх кирлĕ.
Таҫта инҫе Ҫĕпĕр вăрманĕнче
Чупса ҫӳрет, пулас, илемлĕ тилĕ.
Илтсе пĕлетĕп: питĕ лайăх тирлĕ,
Анчах укҫа ҫич чулăн айĕнче.

Тăван куккан кăҫал пура пурасчĕ,
Чĕнтĕр карнис тытасчĕ хĕррипе.
Унта хăна пулма кĕпе ман туянасчĕ,
Хăна пуласчĕ, юрăсем юрласчĕ,
Ташша ярасчĕ хамăн кĕввĕмпе.

Пурашăн ӳснĕ, тет, куккан юманĕ.
Ăна улпут кастарнă, лартнă ҫурт.
Икелĕ ӳсессе кĕтсе тăран-и?
Кукка! Ҫӳҫу шуралĕ, ӳтӳ канĕ,
Ҫĕре кĕрсе лăпланăн, ҫиĕ хурт.

Кĕпе валли тесе эп акрăм кантăр,
Сăха-сăха пĕтерчĕç кайăксем,

Пĕр пĕрчĕ юлнă, çулласах аксан та,
Ватăличчен хуллен кăна йышлантăр!
Вилсен—çынна витме кирлех пирсем.

Çуртна лартаймăпăр, куккам, тăванăм,
Карнис тытса тухас çук хĕррипе.
Хитре кĕпе пулаймĕ халĕ манăн,
Çĕнĕ çурт хăрчĕсем пулаймĕç санăн,
Ташша пуçлаймăп хамăн кĕввĕмпе.

Ват ăмăрткайăк пек атте-аннемĕр
Пире вĕçтернĕ ансăр йăвинчен.
Пуянăмăр—ик алă та чĕремĕр,
Минтерĕмĕр—çăра кăлкан çеремĕ,
Телейĕмĕр—хĕвел çуттисенче.

Çапла такмак кала-кала иртетĕп
Çынсемпеле лавсен хушшисенчен,
Пусма-тавар çурнисене илтетĕп,
Пĕр лавкаран теприне кĕретĕп,—
Çут ată çеç илесчĕ виличчен.

Киле каясчĕ, тăхăнасчĕ ată,
Хисеплĕ каччă пулăттăм вара.
Ун чух çÿçе хур çу сапса яратăп.
Савни! Мана сава-сава юрлатăн
Шап-шур пĕркенчĕк айĕнче туйра.

Какай лавкисенчен иртсе пыратăп.
Сасартăк утă лавĕ çийĕнче



ЧУВАШСКАЯ
КНИЖНАЯ ПАЛАТА
г. Чебоксары Чувашской АССР

Çӳлте хура мӑкла сухаллӑ ватӑ
Тӑра парать: „Лавкасене,—тет,—ватӑр!
Патша йӑваннӑ,—тет,—вырӑнӗнчен“.

Хайхи сӑхманлӑ, çӑпаталлӑ халӑх
Çурхи шыв пек кӗрӗс-мерӗс хускалать,
Халччен курман-илтмен çиллес юнавлӑ,
Аслатиллӗ кӗрлевлӗ, шӑй-шай шавлӑ
Пасар çине хумсем пек вӑркӑнать.

Хӑшсем тӑпӑлтарса туртса илеççӗ
Çара çунасенчен туртисене,
Киле-киле вӑрт-варт хаяр переççӗ,
Çупаççӗ, пӑлтӑр-палтӑр сирпӗтеççӗ
Чечен картуслӑ полицисене.

Пӗри йӗнерӗнчен çакланнӑ мурӗ.
Лаши хыт ӗрӗхрӗ те сирпӗнчӗ,
Вӗçрӗ урам варрипеле тӳп-тӳрӗ,
Хуçин алли çине пусса тӗп турӗ,
Татса хӑварчӗ хулӗ тӗпӗнчен.

Пасар кӗрлет. Хӑлха чикки параççӗ
Шампа пек хырӑмлӑ купсасене,
Тытаççӗ те çӳле йӑлт ывӑтаççӗ,—
Лешсем чулсем çине вӑр-вар анаççӗ,
Çапла каяççӗ „лешӗ“ тӗнчене.

Çынсен аллисенче шур пурçӑн тутӑр,
Çӗрте пусма таварӑн тӗркӗмӗ.

Кама мĕскер? Пурне те илĕр, тытăр!
Пуртс, пăлханнă халăх, сирĕн пултăр!
Пуçтарăр айтăр! Вăхăт мар халь тиркеме!

Пĕренесене йăтса ултшар-çичшерĕн
Юрла-юрла çапаççĕ алăка.
Унта епле камит? Тата мĕскерĕ?
Хĕрлĕ сăмсаллă этемсем кĕрлĕрĕç.
Апла иккен. Ватаççĕ хупаха.

Виç сăлăп янă алăкĕ хупахăн
Шартлатрĕ турпассем пек вăркăнса.
Çитет укçа тўленисем! Пăрахăр!
Юлашкинчен ахаль ĕçме те ахăр
Юрать. Ун чух курка йăтма ансат.

Пичкесене ал-хапăл кустараççĕ.
Ĕçеççĕ куркаран та пĕчĕк черккерен.
Хура шĕлепкепе тулли ĕçеççĕ,
Хăш-пĕрисем çĕре выртсах ланккаççĕ
Шампанскине тўрех кўлленчĕкрен.

III

Пĕлĕт хушшисенчен хĕвел кăварĕ
Сăртсем çине йăлтăртатса ўксен,
Юратнă вырăнăм—Ĕпхў пасарĕ
Кĕрхи мăнтăрлăхпа шавларĕ—
Килеççĕ уйсенчен тулли лавсем.

Чĕкеç пек çăмăллăн утаççĕ акă
Шуратăл хĕрĕсем урамсенче,
Урал тăвĕсенчи чие пылакĕ
Пур илемĕпе çиçсе ытла чечен
Вылять вĕсен чăмăр пичĕсенче.

Авмак куçхаршисем аван-çке,
Пĕкĕлмере пĕветнĕ пĕкĕ пек.
Кун пек хĕрсем пире чунтан савсанччĕ,
Йĕтĕн пирсем çине ята çырсанччĕ,—
Çӳрĕттĕмĕр телейлĕ вĕсемпе.

Шухăшсемпе сĕмленнипе утатăп
Лавсемпелен çынсен хушшисенчен,
Колхозниксен патвар ывăçĕнче
Кĕмĕл укçа янранине мухтатăп,
Тĕрлĕ мухтав такмакĕсем калатăп
Кара Ахмет пахчаçă умĕнче.

Салам-аликкĕм, тарават пахчаçă!
Пĕлетĕп эп: арбуз сĕткенĕнче
Тем пек сап-сарă пысăк уйăх каçĕ,
Хĕвел çутти кăпăкланса тăраççĕ.
Унта вĕсем. Унта пĕтĕм тĕнче.

Алри çĕççĕм вăкăр шăмми аврилле.
Касар! Ларар урасене хуçса!
Çăра çаранлă улăх аса килĕ.
Çĕмĕрчĕсем чипер шăпчăк юррилле,—
Çавсен илемĕ тулнă арбуза.

Ахмет агай! Ытарайми тăванăм!
Черкке пек куçăнта хам сăнăма,
Тата пĕлĕт юххисене кураттăм,
Ту аркине ларса хавас йăтаттăм
Çăра кăмăс тултарнă куркама.

Эпир санпа пĕлĕш, мучи, агайăм,
Юланутпа чылай çӳренĕччĕ,
Хирте шак-сиккипе чуптарнă майăн
Хулу çинче пыратчĕ ăмăрткайăк,
Çуначĕсем ик аршăн тăршшĕччĕ.

Çав ăмăрткайăк пек ӳссе вăйхаллă
Канми-ырми çӳретĕп тĕнчере.
Çыран çинчи патвар тирек пек шавлă,
Шуратăл хумĕ пек таса хаваслă
Такмаксене чĕртетĕп чĕрере.

Эпир пĕрне-пĕри каллех куратпăр
Колхоз арбузĕ тутине туйса.
Унтан вара уйăрăлса каятпăр,
Уйхирсенче, улăхсенче утатпăр
Кашта шăл витĕр ирĕк шăхăрса.

Ĕпхӳ пасарĕн шавĕ витĕр лайăх
Пăхса утатăп халăх хушшинчен.
Итлетĕп: читлĕхре юрлать саркайăк;
Сутмалăх автансем епле нумайăн
Авăткалаççĕ кăнтăр тĕлĕнче.

Шавла, Ёпхӳ пасарӗ, каçӑн-ирӗн,
Ума кӑлар та пурлӑхна кӑтарт!
Эпир—пуян. Мухтавлӑ вӑхӑт пирӗн.
Çуха çинче хумхантӑр тилӗ тирӗ.
Пире кӗççе çине хисеплӗн ларт!

*1937—1939*



## ХĂРУШĂ ÇĔР

Ватă çыннăн ыйăх çук—
Тени, тĕрĕс ахăр:
Тарăхать кĕçĕр Кĕлпук
Канăçне тупмасăр.

Аптăрарĕ ĕнтĕ шалт,
Ним тума пĕлмерĕ,
Хапхана вăл шăлт та шалт
Хыттăнах силлерĕ.

—Çыврăççĕ вилнĕ пек
Виçĕ ывăл—терĕ,
Ак каллех çиленнипе
Хапхана силлерĕ.

Ыйхисен—тет-шуйттансен
Пысăк мĕн хутаçĕ,
Аишĕ тарăхни çинчен
Пĕтĕмпех манаççĕ.

Урама тухса вара
Сак çине вăл ларчĕ,
Нӳрлĕ уçă сывлăшра
Ăшĕ-чикĕ канчĕ.

Тĕксĕм пĕлĕт хушшинчен
Уйăх та анманччĕ,
Хушка çăлтăр ял çинче
Выляса тăратчĕ.

Качака хăйми пекех
Çăп-çăра тĕтреччĕ,
Ту çине вăл тек-текех
Йывăррăн шăватчĕ.

Тап-таса, тусансăрах,
Сывлăш янкăр уçă.
Курăнатчĕ аякран
Выртмари вут куçĕ.

Хуратул пусси енчен
Пыллă çил вĕретчĕ.
Нарăсем çерем çинче
Пуля пек шилетчĕç.

Хăш-пĕр чух, хутран-ситрен
Пĕр пĕччен хуралçă
Тусăрне шакканинчен
Пурччĕ шав пăртакçă.

Вата тополь айĕнче
Кая юлнă каччă
Хăйĕн савнă хĕрĕнчен
Паçăр уйрăлсаччĕ.

Аставать Кĕлпук аван,
Çавăнпа хаваслӑ:
Ватӑ йывăç сыв-сывах,
Хӑйĕнчен те аслӑ.

Çакӑ тополь ĕлĕкех
Шавлӑ ӳхĕретчĕ,
Тухрĕ тĕлĕкри пекех
Авалхи ӳкерчĕк.

Çакӑнта яш ĕмĕрĕ
Иртсе кайнӑ унăн,
Арăмне, ун чух хĕре,
Çакӑнта чуптунӑ.

Хĕр пек сарӑ мӑйăрӑн
Тĕшшине пайланӑ.
Урӑх каччӑ вӑйăран
Çак хĕре вӑрланӑ.

Ун чухне Кĕлпук пĕччен
Чупрĕ, хӑваларĕ,
Çапăнчĕ тӑнлавĕнчен
Вӑр хурах чукмарĕ.

Тӑна кĕнĕ ир çинче,
Юнлӑ пулнӑ куçĕ,
Чаршав карнӑ мал енче
Кĕмĕл шурăмпуçĕ.

Кĕнĕ ватă чĕрене
Иртнĕ пурнăç хурчĕ,
— Ăссăр терĕ те хăйне,
Çавăнтах лач сурчĕ.

Кĕчĕ хăйĕн кĕлетне
Тупаймарĕ ыйăх.
Кăтартать çăлтăрсене
Çурăк витĕр уйăх.

Шухăшларĕ тĕрлĕрен,
Палла ват старикĕн.
Тăхăрвун çул мар сире
Автан киккирикĕ.

Вилĕме кĕте-кĕте
Пысăк тупăк тунă,
Пўлме çине кĕлете
Çăнăх ярса хунă.

Хăй валли масар çинче
Палла тунă вырăн,
Аннем тăпри çумĕнче
Выртăп—тенĕ—ырă.

Лартнă çавăнта пилеш,
Чечекки шап-шурă.
Килмесен унтан билет,—
Шухăшĕ çук урăх.

— Çĕр айне кĕрессинчен
Начарри те пур-ши?
Тăхăнасчĕ виличчен
Çирĕм аршăн пурçăн.

Сухала шăла-шăла
Мускавра утасчĕ,
Хăрса ӳкнĕ ик шăла
Ылттăнран лартасчĕ.—

Ватă шухăш йĕркерен
Харăс сапаланчĕ,
Улăм витнĕ витере
Вĕркелерĕ анчăк.

Пăхкалать çурăксенчен,—
Çивĕч унăн куçĕ.
Таврара мĕнпур енче
Уйăхла та уçă.

Сылтăм кӳршĕ Уртемей
Курăнать çеç лаçĕ,
Хăрушши пулмасть темех,
Шăрчăксем юрлаççĕ.

Сулахай килкартинче
Халăхăн туприйĕ,
Пысăкрах кĕлетсенче
Колхозăн тыррийĕ,

Шăванчĕç хуллен-хуллен
Мĕлкĕсем тăваттăн,
Çÿç тăрать-çке вирелле—
Ну, мĕскер тăватăн?

Кăшкăрасчĕ караул—
Тытăнкă сас ваттăн.
Чĕтĕрет чĕри те ун—
Вăрăсем тăваттăн.

Хурахсен чукмарĕнчен
Тем инкек те килĕ.
— Мамăклă тÿшек çинче
Çиттĕрччĕ—тет—вилĕм.

— Çиттĕрччĕ вăл касхине
Ыйăха татмасăр,
Нÿр çĕре кĕрес чухне
Пултăрччĕ оркестр.

Çаклатса вăл алăкне
Хыттăн хăлăпларĕ,
Лекмĕ—терĕ—пуç çине
Вăр-хурах чукмарĕ.

Ватă çын ĕмĕрĕнче
Çав тери хайлаллă,
Шăпăрне пÿлме çинчен
Илчĕ каламалăх.

Урине тапа-тапа
Кисрентернĕ майăн
Чупкалаççĕ урампа
Этемсем нумайăн.

Те ырра, те инкеке
Урнă шăпăр каçĕ—
Йăхран сике-сике
Хашкаса чупаççĕ.

Ăссăр туй та çакă туй!—
Теççĕ хĕр-ипраçĕ,
Пулас теççĕ-çке,—матур,
Хăвăрт тумланаççĕ.

Ват Кĕлпук вĕре-вĕре
Чарăнма та манчĕ,
Улăм витнĕ витере
Вĕркелет хай анчăк.

Пухăннă пӳрт умĕнче
Пĕтĕм ял, мĕнпурĕ.
Шурăмпуç вăхăтĕнче
Туй сăри те пур-и?

Виçĕ ывăлĕ пӳртрен
Сирпĕнсе тухаççĕ,
Кĕлете алăкĕнчен
Шалт та шалт çапаççĕ.

— Часăрах лăплан атте.
Кан, тĕнче ухмахĕ!

Кăшкăраççĕ виççĕш те—
Санăн ăс пурах-и?

Алăкне уçать Кĕлпук,
Силленет сухалĕ:
— Сирĕн—терĕ—ăсăр çук,—
Туй килет-и халĕ.

Эп кăтартăп ак сире,
Кам йӳтенĕ?—терĕ,—
Пăхăр-ха тӳшекĕре,
Лапчăннă минтерĕр.

Çывăратăр вилнĕ пек,
Ыйăх—сирĕн тупăк.
Вăратмашкăн пĕтĕмпе
Кирлĕ пулĕ тупă.

Сулахай килкартинче
Халăхăн туприйĕ.
Пысăкрах кĕлетсенче
Колхозăн тыррийĕ.

Туй таврашĕ çавăнта
Курăр, тетĕп,—кайăр.
Çăварсем карма кунта
Килтĕр-и нумайăн?

Ăссăр марччĕ ĕмĕрте,
Йӳтеместĕп халĕ,
Ват Кĕлпукăн ахальтен
Шуралман сухалĕ...

Çутăлать. Кĕлет çинче
Вĕçрĕ кăвакарчăн.
Инçетре, уй-хирсенче
Тыра кăвакарчĕ.

Виçĕ ывăлĕ килне
Таврăнчĕç сасартăк,
Йăлăнаççĕ ашшĕне,—
Вăрçнăшăн каçартăр.

Çĕр çăтманĕ вăрăсем
Юраттарнă уçă,
Алăк урлă сăлăпсем
Иккĕшĕ те хуçăк.

Икĕ учĕ картара,
Лавĕ тулли тулă.
Вăррисем аран-аран
Тарнă аслăк урлă.

— Пĕлсе тăтăм витĕрех—
Ват Кĕлпук мухтанчĕ—
Ахальтен-и витере
Вĕркелерĕ анчăк?

*1938—39*



## СĂСАР ÇĔЛĔК

Уртемей мучи çӳренĕ
Хуп-хура шĕлепкепе,
Пулнă ун матки çĕленĕ
Икĕ улача кĕпе.

Тата пулнă чĕлĕм унăн—
Пăхăрпа тыттарнăскер,
Çĕрпӳри ăстаçă тунă—
Чăпăкĕ питех кĕске.

Вăл малтан кĕске те марччĕ,
Туртмалли пулман чухне
Уртемей мучи туратчĕ
Вĕрене чăпăк вĕçне.

Чĕлĕмне вара чĕртетчĕ,
Сăвăратчĕ пăк та пак.
Çăпата сутса илетчĕ
Хушăран кăна тапак.

Çиçĕм пек пĕрре сасартăк
Сарăлчĕ хыпар ялта,—

Унсăрăн хитре сăсар та
Пулмĕччĕ нихçан унта.

Революци пулнă, теççĕ,
Ӳкнĕ Микулай патша.
Çĕр касма хире каяççĕ
Çамрăкки, ватти, вĕт-шак.

Вĕсен хыççăн ака ĕнтĕ
Пирĕн ватă Уртемей,
Ĕмĕрĕ пайтах пулин те,
Шыраса çӳрет телей.

Хăшĕ пуртă, хăшĕ сенĕк
Йăтнă, хăшпĕри чукмар.
Уртемей туя çĕкленĕ
Анасен картне хывма.

Пĕлĕтсем пек тухнă халăх,
Хăпса килнĕ ял веçех.
Кĕреçе пекех сухаллă
Ват Кĕлпук мучи виçет.

Алликче вылять хăлаçĕ.
Касăлать улпут çĕрĕ.
Чарăнать Кĕлпук пăртакçă,—
Шухăшлать пуль вĕççĕрех.

Пар лашаллăн, питĕ меллĕн
Вăркăнса килет çулпа
Сиктĕрмеллĕ те кӳмеллĕ
Питĕ чаплă урапа.

Пуртă йăтăр! Сенĕк тытăр!
Пăхăр-хэ, епле инкек...
Çĕр улпучĕ, ылттăн йытă,
Килĕнчен тарать иккен.

Уртемей пырса ал-хапăл
Пĕр лашин йĕвенĕнчен
Ярса тытрĕ, тăпăр-тапăр
Чарчĕ хăй выранĕнче.

Пĕшкĕнсе лэрать хăюсăр
Пур пек шура господин.
Хăть те хĕнĕр, хăть те пусăр,—
Сурăх пек шăпланнă тин.

Нумаях пулмасть, çӳретчĕ,
Хăпартатчĕ сехрене,
Çырларан илсе каятчĕ
Пирĕн çамрăк хĕрсене.

Уртемей унта кĕрлерĕ
Паранçи пек пулчĕ ал:
— Пиншакна хывсамччĕ—терĕ—
Ырă çыннăм, генерал!

Генерал:—Тумланăр, мейĕр!—
Тесе хыврĕ пиншакне,
Тăхăнчĕ хăй Уртемейĕн
Çĕтĕк-çатăк сăхманне.

— Лентă тытнă шăлавар та
Кирлĕччĕ—тет Уртемей.

Генерал хывать сасартăк,
Чун çеç юлтăр,—ӳркенмест.

Тăхăнать хăй Уртемейĕн
Кивĕ улача йĕмне.
Ку кĕтӳçĕ пулĕ—тейĕн,
Пăхсанах улпут çине.

Уртемей питех те çиллĕ
Ларакан улпутăнне
Хывса илчĕ сăсар тирлĕ,
Кăпăш çăмла çĕлĕкне.

Хăй вара ăна пуç сулчĕ,
Ирĕксĕр тыттарчĕ ал:
—Санăн—терĕ—шалçу тулчĕ,
Халĕ эпĕ генерал.

Çĕр касма капланнă халăх
Шăхăрать-çке ши! те ши!
Хуçине кăшт сулламалăх
Ĕрĕхет ак пар лаши.

Çулĕ кукăр-макăр пултăр!
Кайрĕ мăнтăр шурă пит,
Çулсăр-мĕнсĕр шăлтăр-шалтăр
Шăлтăртатрĕ урапи.

Уртемей хитре мундирлĕ.
Хулăн хулĕсем çинче
Ылттăн пагонсем тем тĕрлĕ
Йăлтăрарĕçĕ чечен.

Шăлаварĕ пит шалпар та,
Тĕсĕ пĕлĕт пек кăвак,
Çĕлĕкĕ çинче кокарда
Йăлтăр-ялтăр çунчĕ ак.

Пур этем те лăхăл-лахăл
Ăш тытса кулаççĕ-çке,
Пур енчен те генерал хăй,
Чăпăкĕ анчах кĕске.

Уртемей, çапах та эсĕ,
Уруна пăхсан—хресчен.
Пилĕк-улт Георг хĕресĕ
Анлă кăкăру çинче.

Аттине хывса илмесĕр
Юлнă эсĕ, тунката!
Генерал пулма илемсĕр,—
Урăнта вĕт çăпата.

Пилешрен сан чăпăк пултăр
Лайăхрах, хăвна кура.
Аллăна тыт çивĕч пуртă,
Пахчара тапак тура.

Вăрăм ĕмĕр, сывлăх пултăр.
Енчĕкне тултар тапак.
Унка-унка тĕтĕм тухтăр,
Чĕлĕм çунтăр пăк та пак.

Туянатăн сарă атă,
Ӳстерен мăклă сухал.
Тин вара, мучи пулатăн
Эс те вата генерал.

Пирĕн халăх урлă-пирлĕ
Уртемей пирки шӳтлет,
Сăмахсем юмах пек юплĕ,
Кашниннех кулас килет.

Çак кунтан тин Уртемейĕн
Пуçланса вара каять
Пысăк та хавас телейĕ.
Ăна пĕлчĕ пĕтĕм ял.

Уртемей туянчĕ ата
Белебей пасарĕнче.
Çут пагонĕпе кокарда
Ăчисен аллисенче.

Теттелле вĕсем выляççĕ,
Пырать вăрçă сак çинче.
Шур пуканисем тараççĕ,
Хĕрлисем мĕнпур енче.

Уртемей чипер усратчĕ:
Хăнана каяс чухне
Якатса çеç тăхăнатчĕ
Мундирпе шăлаварне.

Тĕпелте, малта ларатчĕ
Чаплă пекчĕ кĕреке,
Нихăçан та вăл хывмастчĕ
Сăсар тирлĕ çĕлĕке.

Тӑрнасем ҫуллен иртеҫҫӗ.
Шӑвӑнчӗ ҫул хыҫҫӑн ҫул.
Тусене ҫилсем ҫиеҫҫӗ.
Ҫырмара вӗтелчӗ чул.

Астӑвар-ха, пӗчӗкҫеҫҫӗ
Теветкел ачасене,
Халь вӗсем те сиктереҫҫӗ
Ачисен сӑпкисене.

Уртемей хура сухалӗ
Шурӑ чӑкӑт евӗрех,
Мундирне те ӗнтӗ халӗ
Кӗве ҫинӗ ҫӳпҫере.

* * *

Ваттисем вӑлтса каларӗш:
Ҫул ҫинчи мулкачӑ пек
Ансӑртран ҫеҫ акӑш-макӑш
Сикнӗ-тухнӑ пӗр инкек.

Пӗр пӑрҫа ани колхозӑн
Шурӑ шурлӑх патӗнче,
Сӑрт ҫинче пулман пулсассӑн,
Уртемейӗн пуҫӗнче,

Сӑсар тирлӗ ҫӗлӗк халӗ
Ҫӳрӗччӗ вӗчӗхтерсе,
Кӳршӗ-аршӑ, пӗтӗм ялӗ
Кулас ҫукчӗ ихӗрсе.

Тӑрнасем ялан лараççӗ
Çавӑнта пӑрça сӑхма.—
Пирӗн пуçлӑхсем хушаççӗ
Мучие хурал тӑма.

Пӗлӗтсем хуллен çеç шунӑ.
Пулнӑ шутсӑр сивӗ кун.
Çӳçенӳлӗ ватӑ юнӗ
Пӑсӑлма пултарнӑ ун.

Çӗрӗпе вӑл хӑваланӑ
Çатӑ пыр тӑрнасене.
Шуçӑм килнӗ. Кирлӗ канӑç
Ывӑннӑ урисене.

Уртемей мучи—хуралçӑ
Путнӑ тутлӑ ыйхине.
Пуçӗнчен йытсем хываççӗ
Сӑсар тирлӗ çӗлӗкне.

Кутӑн-пуçӑн тӑлпалаççӗ,
Çӑлкалаççӗ те çӑмне,
Йӑлӑхаççӗ, тарӑхаççӗ
Пытараççӗ тыр ӑшне.

Çамкине витернӗ сывлӑм.
Сиксе тӑнӑ Уртемей:
— Вӑрӑсем тивмен, тет, сывӑ,
Çумӗнчех иккен телей.

Çӗлӗкӗ çук—йывӑр хуйхӑ,
Ухтарать мӗнпур çӗре.

Уртемей! Халь хытă суй-ха,
Хайласем тупса çӳре.

Уткаларĕ каллĕ-маллĕ,
Курчĕ çӳлĕ ту çине
Çĕлĕксĕр вăрăм хевтеллĕ
Выртнă хăйĕн мĕлкине.

Нимĕнпе те лăпланмасăр
Тарăхать тăрнасене:
— Пурсăра тытсан, тăраймăр
Манăн çĕлĕкĕн хакне.

Чĕлĕмне хыпса паккарĕ,
Хăйĕнпе хăй каласса;
Асăнчен çапах каймарĕç
Сăсар çĕлĕк те пăрçа.

— Кĕлпукра та пур çав айăп,
Хăй вăл манăн пуçана.
Кунта — терĕ — вырăн лайăх,
Çав актарчĕ пăрçана.

Тăхăрвун çулхи çав ватă
Пĕлмелле таван çĕрне,
Ку тĕле мĕнпур тавра та
„Тăрна шурĕ“ тенине.

Айăп пур-тăр манăн ахăр,
Çавăн чух пухусенче
Эх, каласчĕ ман, ухмахăн,
Тăрнасем пурри çинчен.

Калаçса килне уттарчĕ,
Кĕнеччĕ çеç алăкран:
— Çĕлĕку ăçта çухалчĕ? —
Ыйтрĕ арăмĕ унтан.

— Кĕпертен каçса пĕтменччĕ,
Çил хускалчĕ те, тӳрех
Çĕлĕке çапса ӳкерчĕ
Çырмана, вăта çĕре.

Çапларах суйса паратчĕ
Уртемей чылай вара.
Тыр вырас вăхăт пуçланчĕ,
Кĕр-кĕрлерĕ пусăра.

Каç пулса килет. Туртатчĕç
Лашасем пит йывăррăн.
Путене вĕçсе хăпарчĕ
Вăрттăн тунă йăваран.

Кĕлтесем çыхан хĕрарăм
Тупнă унăн йăвине,
Сăсар çĕлĕкре пит тарăн
Йăва тунă путене.

Уртемей мучи, мăнтарăн,
Хыçкалать ĕнсе хыçне.
Уй хиртен тухса та тарăн —
Тӳс-ха çĕлĕк мăшкăлне.

Арăмĕ чылай çиленчĕ,
Пычĕ упăшки патне.

Хыттӑн-хыттӑн ҫутӑлтарчӗ
Питӗнчен Уртемейне:

Ак сана—тет—ҫил хускалчӗ,
Ак каҫаттӑн кӗпере!
Ҫӗрчӗ—тет—кил-йышӑн ячӗ,
Ҫавӑнпа—тет—ак тепре!

Яланах суя кӗперӗ
Тупаканччӗ, — ӳркенмен.
Пӗр сӑлтав та тупаймарӗ
Пирӗн ватӑ Уртемей.

*1935—1939*



## ТУЙРА

Бригадир килне пӗр вӗҫҫӗр
Хӑпса килнӗ пӗтӗм ял.
Тӗпелте татти-сыпписӗр
Кӗрлесе ларать рояль.

Акӑшсем пек ушкӑн-ушкӑн
Сар хӗрсем те каччӑсем
Ак пуҫларӗҫ кӗвӗ хушнӑ,
Кӗвӗ майлӑ ташӑсем.

Шӑпӑрҫӑ Кӗлпук юлташӑн
Ӳтӗнче иртет чикен,
Кӑмӑлне вӑл пусарасшӑн
Кӑн-кӑвак пуҫне чикет.

Хӑй юратнӑ, хӑй ырланӑ
Бригадирӑн туйӗнче
Чи малта пӗр вырӑн панӑ,
Ҫапах тӑвӑр туйӑнчӗ.

Пĕр шуралчĕ, пĕр хĕрелчĕ.
Çамрăк каччăпа хĕре
Мăшăрлатнă чух, кĕрлетчĕ
Шăпăр ĕмĕр-ĕмĕрех.

Каяюк пек ушкăн каччă,
Маяюк пек сар хĕрсем
Такмаклатчĕç те ташлатчĕç
Унăн умĕнче хĕрсе.

Аййнче çемçе минтерччĕ,
Аййнче çавра пукан,
Алтăрпа сăра паратчĕç,
Тавтăватчĕç Кĕлпука.

Урине тапсан, пучах пек
Силленетчĕç сĕтелсем,
Аслă пулнă унăн чапĕ,
Лайăхчĕ чĕлĕхĕсем.

Ун çине никам тухманччĕ,
Ак паян, анчах та халь
Вĕчĕхтерчĕ, тарăхтарчĕ
Тĕпелте ларан рояль.

Вată çын çилли килмен-и,
Халĕ намăс куртăр-и?
Шăпăрне вăл хатĕрленĕ
Бригадир туйне юри.

Чĕлĕхсем туса вăл хунă
Шурлăхри хăмăшсенчен,
Шăпăр пуçĕ — какăр тунă
Вăкăрăн майракинчен.

Хур çупа сĕрсе çемçетнĕ
Хытнă шăпăр хăмпине,
Ĕмĕт пулнă, кайăп — тенĕ —
Бригадир тăван туйне.

Çĕнĕ туй пулать культурлă —
Тенине малтан илтсен,
Кун пек намăс, кун пек хурлăх
Курасса Кĕлпук пĕлмен.

Ăс кĕмен пек, лĕкĕрти пек
Ларас мар — тет — харкашса,
Тытăнам-ха акă эпĕ,
Рояльпе — тет — тавлашам,

Пĕрре вĕрчĕ, унăн пичĕ
Çурăлас пек курăнчĕ,
Урине тапса çеç илчĕ,
Çухăртма та тытăнчĕ.

Акă ташă хыççăн ташă —
Тăпăр-тăпăр-тăпăртăк!
Шăпăрне Кĕлпук каласшăн
Хытăрах, тата пăртак.

Çамрăк та питех хитре хĕр
Васкатса пӳрнисене,
Аслати пекех кĕр те кĕр
Кĕрлеттерчĕ рояльне.

Çурхи шыв пек пулчĕ халăх,
Шавласси килет вĕсен:
Çат-çат турĕ мĕнпур алă,
Йăкăшлатрĕç урисем.

Колхозра тăват бригадă,
Пурĕ çитмĕл пĕр инке,
Хăшĕ çамрăк, хăшĕ ватă,
Такмакласçĕ пĕр пекех:

„Пултăр ырă, пултăр сывă,
Паттăр пултăр кинĕмĕр.
Çичĕ ĕмĕт, пилĕк ывăл
Унтан эпир кĕтĕпĕр.

Иккĕш — икĕ ăмăрткайăк,
Икĕ летчик пулĕç те
Яланах вĕçсе, ай, кайĕç
Пирĕн ял çинчен çӳлтен.

Тата иккĕш питĕ кирлĕ
Çӳретме карапсене,
Тинĕс çийĕн урлă-пирлĕ
Пăхса тухчĕр тĕнчене.

Тӑванла тӑрса тӗлме-тӗл
Калаҫма тесе вара
Кӗҫӗнни ҫеҫ председатель
Пулӗ пирӗн хушӑра.

Ҫакӑн пек пулсан, аванччӗ,
Ватӑлмасӑр каҫ та ир
Ҫӳреччӗ Мӗтри Иванчӑ,
Пирӗн аслӑ бригадир".

Пирӗн инкесен такмакӗ
Килӗшрӗ ват шӑпӑрҫа,
Ҫавӑнпа тапать пуль акӑ
Урине хуҫа-хуҫа.

Ҫӗн хӑна Кирил Иванчӑ
Бригадирӑн пиччӗшӗ,
Ташласан питех аванччӗ —
Терӗ ватӑ шухӑшӗ.

Шӑпӑрне часах вӑл хучӗ
Хӑйӗн сылгӑм хул айне,
Ерипен, тирпейлӗ пычӗ,
Тачӗ вӑл хӑна умне.

— Ан ҫилен, Кирил Иванчӑ —
Сӑмахне пуҫлать Кӗлпук, —
Аҫупа эпир юлташчӗ,
Пӗр пек ҫынччӗ ӗлӗк чух.

Манăн шăпăра итленĕ
Çамрăк чух вăл туйсенче,
Ташласа умра çӳренĕ,
Тутăр сĕлтнĕ аллинче.

Халь кунта, кунта пулсассăн,
Янăрĕччĕ ун юрри.
Эх анчах, ĕмĕр хаваслă,
Çăмăл пултăрччĕ тăпри.

Эс, çунатлă çын, тăванăм,
Вĕçсе килтĕн Мускавран,
Тĕнчипе çӳрет ят санăн,
Пысăк çын вĕт, хамăртан.

Ват çынна кăмăл тумалăх
Сан ярасчĕ туй ташши?
Манăн шăпăр, манăн алă
Кăмăлна кăшт каймĕ-ши?

— Пултаратăп — тет вĕçевçĕ,
Харăсах сиксе тăрать,
Куçĕсем йăл-йăл выляççĕ,
Пиншакне йӳле ярать.

Хĕрлĕ орденпа ялтрарĕ
Тем сарлакăш кăкăрĕ.
Рояльпе пĕрле янтрарĕ
Ват Кĕлпукăн шăпăрĕ.

Ай-ну, ай-ну; паттăр та
Хамăрăн хăна!
Йăкăш-йăкăш, тăпăртăк
Авăнать кăна.

Мамăк пек те кайăк пек
Вĕçнĕ тĕлсенче,
Çапса илет аллипе
Атă кĕллинчен.

Тӳсеймест Кĕлпук, лармасть те,
Пĕрмаях ура çинче,
Вăл мухтавлă, ĕнтĕ маçтăр
Летчик тусĕ умĕнче.

Кĕлпука тата мĕн кирлĕ?
Пĕр канăçсăр вĕрнинчен
Пĕрлĕхен пекех хĕп-хĕрлĕ
Тĕс вылять ун питĕнче.

Вылясан, чипер выляс-тăк,
Кĕр-кĕрлетĕр хытăрах!
Шăпăрне тӳрех сасартăк
Çӳлелле вăркăнтарать.

Шăпăрĕ хăй тĕллĕн харсăр
Кĕввине кала-кала
Яванчĕ те, лăпланмасăр
Ӳкрĕ акă каялла.

Çĕнĕрен вĕрет пĕр тапхăр.
Тепĕр хут сирпĕнтерет.
Маччана лекет те, сассăр
Шăпарĕ персе ӳкет.

Эх, вылясчĕ! Кăкăр ансăр.
Сывлăшĕ çитмеллĕх çук.
— Парăр-ха сăра пĕр алтăр.
Пырăм типрĕ — тет Кĕлпук.

*1938*



II

# КĔЛПУК МУЧИ КАЛАВĔСЕМ

## ПĔРРЕМĔШ КАЛАВ

Ĕлĕк чăн-чăнах, атьсемĕр,
Çӳç тăраччĕ вирелле.
Курнă ĕмĕрте темтепĕр —
Пĕр камит калас килет.

Кулăшсем эсир пĕлесшĕн,
Ун пек пулнăччĕ пĕрре.
Ăнсăртран, шуйттан илесшĕ,
Лекме тиврĕ Çĕпĕре.

Вĕтлĕхре пĕр çимĕк кунĕ
Иртрĕм çамрăк хурăна.
Хулпуç урлă милĕк хунă.
Уттаратăп мунчана.

Шыв хĕрри те йăмра айĕ,
Айккипе хăва çатан.
Калама çук питĕ лайăх,
Çăвăнсан, шыва чăман.

Шыв сапатăп. Чулĕ тутлă,
Милĕк алăра вылять,
Çурăм тăрăх, пилĕк урлă
Çатăл-çатăл çапкалать.

Сухара ялан пĕччен çĕ,
Килĕмре пурте вĕт-шак.
Çулçăсем ӳте шăлаççĕ —
Çав тери канать шăмшак.

Мунчара ман ăшă кунăм
Темĕнрĕн те ĕрехет.
Тымарта хускална юнăм
Кĕр тихи пек ĕрĕхет.

Питĕрех те канлĕ вырăн
Сарлака лапка çинче,
Вилесси те — тетĕп — ырă
Мунча кĕнĕ хыçĕнчен.

Тукасри Иван Çимунĕ
Хытă çапăнна çĕртех
Пĕр сисмесĕр мĕскĕн вилнĕ —
Эпĕ те вилĕттĕмех.

Шухăшăн вĕçне тухманччĕ.
Сасă илтĕнчĕ тулта:
— Хăвăрт тух, мунча Иванчă,
Куланай кĕтет кунта.

Староста сасси. Сисетĕп.
Е-е—тетĕп.—Пĕтрĕмĕр.
—Çук, тухмастăп эпĕ—тетĕп,
Çимĕк хыççăн тӳлĕпĕр.

Алăка çаклатрăм вирлĕ.
Çапăнатăп çаплипех.
Сирпĕнет сулмаклă милĕк
Маччана çитиччenex.

Тух-ха, çитĕ Çимĕк кунĕ,—
Чи малтан хăлха чикки!
Кăпăк мар патша саккунĕ,
Милĕк мар ун патакки.

Пĕлтĕр эпĕ икĕ сумшăн
Виç кун тĕпсакайĕнче
Ларнăччĕ, анчах та уншăн
Хуратмарĕç хут çинчен.

Мĕскĕн çын пурне тӳлетĕр.
Хăть те çурăл! Пар та пар!
Çăлса кайрĕç пĕр минтер те,
Тепĕр çутă сăмавар.

Чулăмсем шерпет пек пулăр,
Чаш-чашлатăр калаçса!
Çурăм тăрăх, пилĕк урлă
Çемçе милĕк çăт та çат.

Староста тăват кĕтереслĕ
Мунчана ишес пекех
Хĕрĕнкĕ, усал ҫиллеслĕ
Ҫухăрашрĕ тек-текех.

Пĕр каска илсе сасартăк
Ҫĕмĕрмешкĕн тытăнчĕ,
Сывă пул! мунчаҫăм,—алăк
Шăтăрт-шатăрт вăркăнчĕ.

Староста кĕчĕ, ал-хапăл
Ярса тытрĕ пĕҫĕрен.
Туртăнатăп тăпăл-тапăл,
Чул лекет те пĕҫерет.

Икĕ милĕк—икĕ алă,
Хыт паратăп ăшшине,
Эх, пуҫларăм ăш канмалăх
Ăшăтмашкăн хайхине.

Тикĕт сĕрнĕ ҫутă атă,
Тĕрĕленĕ шур кĕпе.
Эп мунча кӳртсе яратăп
Аслă Ҫимĕк йăлипе.

Староста шари пуҫларĕ,
Хыттăн ҫухăрма: распуй.
Кăмăлна санне каймари
Ху пуҫланă чаплă туй?

Урăхла сана ташлатăп,
Пысăк çыннăм староста?
Милĕк тунипе çапма та
Эпĕ питĕрех ăста.

Çилĕ килчĕ. Ывăтатăп
Хĕрнĕ шурă чулсене.
Урапа сиксе таптатăп
Шампаланнă хырăмне.

Ак сана, саккун шуйттанĕ,
Вĕрипе тĕне кӳртем,
Йĕрĕнчĕк ӳтӳ сан канĕ
Вĕлтĕренлĕ уй-хирте.

Пĕтĕм халăмпа сапатăп
Пĕр витре вĕри шыва.
Пĕтрĕн ĕнтĕ, çутă атă!
Эпĕ пурпĕр сыв-сывах.

Мунчаран тухсан, чăматăп
Çӳçенӳллĕ сив шыва,
Мĕлкĕсем çине пăхатăп:
Пĕр хĕвел те пĕр хăва.

Çут çунатлă хĕрлĕ пулă
Ишнине кура-кура
Уйрăлса каятăп пулĕ
Ӳснĕ çĕрĕм-шывăмран.

Тăхăнтăм. Пăхатăп эпĕ;
Староста выртать пĕччен.
Те вилеп-и, те килеп-и
Инçетри вырăнсенчен?

Таврăнтăм киле. Виç ывăл
Аркăм çине туртăнать.
Тÿсеймерĕм, пигĕ йывăр,
Куçăмран куççуль анать.

Тепĕр кунне сăнчăрларĕç,
Тÿпелерĕç те пĕрре,
Пуççилле мана ăсатрĕç
Аякка—сив Çĕпĕре.

Революци хыççăн акă
Таврăнтăм тăван киле,
Ывăлсем автан тукмакĕ
Тыттараççĕ ман алла.

Кÿршĕ-аршăм, хурăнташăм
Шăнкăрав çакса пĕкке
Хăнана илсе каясшăн,
Хатĕрленĕ кĕреке.

Кашниех манпа хисеплĕ,
Юнашар ларма тăрать,
Ман умра ытла илемлĕ
Лайăх юрă янăрать.

Ваттисем пулаççĕ хирĕç,
Çĕлĕксĕр таяççĕ пуç.

Икӗ уйӑх каҫӑн-ирӗн
Хӑнара ҫӳрерӗм пуль.

Ывӑлсем параҫҫӗ атӑ,
Виҫ кӗпе!—теҫ виҫӗ кин.
Эп ларатӑп, шухӑшлатӑп:
Питӗрех те хаклӑ кил!

Унтанпа темтепӗр курнӑ,
Шурӗ ӗнтӗ ҫирӗм ҫул.
Тӳррипех калатӑп: пурнӑҫ,
Манӑн пурнӑҫ пыл та ҫу.

Ирхине ирех тӑратӑп,
Савӑнса вара юри
Уй-хирсем тӑрӑх утатӑп,
Сухала лекет тырри.

Колхозра хисеп тӑваҫҫӗ,
Кирлине, пура-ҫука
Тишкӗрме ялан чӗнеҫҫӗ
Ҫакӑ ватӑ Кӗлпука.

Ав лере, тӑванӑм. эсӗ,
Куран пуль—масар ҫинче
Староста шуйттан хӗресӗ—
Ҫӳлӗрех ыттисенчен.

*1938.*

## ИККĔМĔШ КАЛАВ

Ирхине. Хĕвел тухманччĕ.
Сас та çукчĕ таврара.
Ушкăн кăвакал хăпарчĕ
Шур тĕтреллĕ çырмаран.

Кăнтăртан хуллен пăртакçă
Вĕркелеççĕ те çилсем,
Татăлса вĕçсе каяççĕ
Картисем эрешменсен.

Каччăсем ак таврăнаççĕ
Выртмаран шак-сиккипе,
Кĕписем шалпарланаççĕ,
Курăнаççĕ хăмпă пек.

Сывлăмлă хирте ман атă
Хăварать йĕр хыçала,
Хăмăлсем çинчен утатăп
Малалла та малалла,

Хушӑран мӑнтӑр, пӗчченҫӗ
Пӗтӗлти путенесем
Ман умран тухса вӗҫеҫҫӗ—
Алтӑр пек пӗсехисем.

Шурлӑх урлӑ, вар-вар урлӑ
Ҫамӑллӑн кая-кая
Пӑхкалатӑп пысӑк муллӑ
Тырӑллӑ пуян уя.

Суратсем тулли сар тулӑ,
Пучахсен тӑршшӗ пӗр шит.
Вӗсенчен перет пек тутлӑ
Шурӑ хӑпарту шӑрши.

Эх, телей хальхи этемӗн:
Мӑръерен тӗтӗм тухсан,
Чӑннипе урам илемӗ
Курӑнать-ҫке тавраран.

Кӗркунне кашни кил-ҫуртӑн
Шӗл-кӑвар кӑмакинче,
Пӑсланать чӑхӑ та, хур та
Сарлака ҫатма ҫинче.

Урампа иртсен, чӗнеҫҫӗ:
— Хапӑл ту-ха! Кӗр, кӗрех!
Чаплӑ хӑнасем лараҫҫӗ
Тӗпелте, кӗрекере.

Акă вăл уй-хир пуянĕ,
Савăнăç тулли тĕнче.
Хăпарать колхоз капанĕ
Саккăрлă ура çинче.

Хамăн тĕллĕн шухăшлатăп,
Çакăн пек шутла-шутла
Утнăçем тата утатăп
Малалла та малалла.

Ак каятăп та каятăп
Хамăнла çеç ерипен.
Сăрт çинче ĕçлет бригада
Ир-ирех ушкăнĕпе.

Пырса çитрĕм, тишкĕретĕп,
Кăтартса тăсатăп ал:
— Мĕншĕн кунтан вĕçрĕ—тетĕп—
Ик-виç ушкăн кăвакал?

Ахальтен ларать-и кайăк
Çап-çара хăмăл çине?
Пăхăр-ха эсир, нумайăн
Тăкăннă пучахсене.

Çавăнта ăшра хĕрӳллĕн
Ятласа илеп хама:
Кунта—тетĕп—питĕ кирлĕ
Çырмалли хура хăма.

Алӑсем пушаннӑ майӑн
Кӗлтесем йӑта-йӑта,
Вӗсене тирпейлӗ, лайӑх
Купалатӑп сурата.

Манӑн алӑ—тетӗп—ҫӑмӑл
Вӗрентеп ҫамрӑксене:
— Пӗр эрне лӳшкетӗр ҫӑмӑр,
Ҫӗртес ҫук кӗлтесене.

Вутпуҫҫи, пукра курап-и,
Тасататӑп тыр ҫинчен,
Кӗрепле туртатӑп эпӗ
Тырӑ ҫыхнӑ ҫӗрсенче.

Кун та иртрӗ. Эп ларатӑп
Каҫ вучахӗ умӗнче,
Юптаратӑп, такмаклатӑп
Курнипе илтни ҫинчен.

Пӗркенсе канма выртатӑп
Уҫӑ пӗлӗт айӗнче,
Пӑхкалатӑп, шухӑшлатӑп:
Кӑмӑллӑ иккен тӗнче!

Пуҫ ҫинче хуркайӑк ҫулӗ
Сӗт ҫырми пек тап-таса.
Ӗмӗр-ӗмӗрех вӑл юлӗ
Хальхин пекех карӑнса.

Пурăнасчĕ те пăхасчĕ
Çутă çăлтăрсем çине,
Çакă вырăнта утасчĕ
Çĕр çултан та малашне.

Пĕлейместĕп,—мĕншĕн пулĕ
Çыннăн ĕмĕрĕ кĕске.
Пурăнать-çке çăрттан пулă,
Шывакрах какайлăскер.

Тăватçĕр çул çав ухмахăн
Шывсене пăтратиччен,
Эпĕ пурăнсан та ахăр
Усăллă нумай хутчен.

Çĕр çула çитсен, урамăн
Варрипе çăмăл утса
Каччăлла иртесчĕ манăн
Сĕрме купăс каласа.

Пурăнăç хитре хăвачĕ
Илĕртет малашнелле.
Кăвак шуçăм хăпарманччĕ,—
Уттаратăп килелле.

Автансем автаççĕ виççĕ.
Хăпарать çăра тĕтре.
Çирĕм çул хушши пĕр вĕççĕр
Тупăк выртнă кĕлетре.

Вилĕмĕн пĕчĕк карапĕ,
Ан ăсан масаралла!
Çанăхне пушатрăм эпĕ,
Йăтса тухрăм тулалла.

Васкамасăр çеç кăлартăм
Йĕркипе пăтисене.
Савапа тата якатрăм
Кивĕрех хăмисене.

Якатса, касса картлана,
Çыпăçтарнă хыççăн ман
Пулчĕ хурапа сăрланă
Пĕр тăваткăл пĕр хăма.

Хăмана йăтса васкавлă
Уттаратăп хирелле.
Ирхине. Хĕвел тымарлăн
Çĕкленет пĕлĕтелле.

Ан çиленĕр-ха, тархасшăн,
Ырă ут та такăнать.
Çакă çăмăлттай калавшăн
Касăру ыйтап кăна.

*1939*



## ВИÇÇĔМĔШ КАЛАВ

Кăрлачри хаяр çанталăк
Кĕрĕк витĕр сив-сивех.
Пĕлĕтре виçĕ хăлхаллă
Хăмач çип тĕслĕ хĕвел.

Шартлама сивве курман-и?
Кайăк та шăнса ӳкет.
Çул çинче çуна тупанĕ
Макăрнă пек ĕсĕклет.

Тĕтĕм те юпа пек тӳрĕ
Çĕкленет мăръесенчен.
Куççуле тăкать кĕрт юрĕ
Алчăрана куçсенчен.

Ялтăрать сывланă сывлăш
Пăр пулса сухал çинче.
Çурăлать чăлт та чалт йывăç
Сивĕ кун хăватĕнче.

Акă сурăх хыççăн сурăх
Макăрни илтĕнкелет.
Пуçланать тăман. Мĕн урăх?
Выльăх ăслă. Вăл пĕлет.

Пирĕн таврара хăрушă
Эрнипе пырать тăман.
Шухăшсем пуçра та пушă,
Ним тума та аптăран.

Выльăха апат памашкăн
Пӳртӳнтен карта таран
Çӳреме пĕр аллă аршăн
Сӳс пăяв тăсса каран.

Пăява тытса хул çӳллĕш
Юр ăшне путатăн-çке.
Çил куçа çапать хĕрӳллĕн, —
Кураймастăн нимĕскер.

Е çуран этем, е лавçă
Ун чухне пулсан хирте,
Маяксем те çухалаççĕ,
Чĕрĕллех тăман витет.

Кунĕпех тӳпе тасаччĕ,
Кăвакарчăн пек кăвак.
Алăра йĕлме турачĕ:
Хатĕрлеттĕм эп кăвайт.

Пӗлӗтсем хуллен хускалчӗҫ,
Тӗксӗмленчӗҫ кай енче,
Тек хуралнӑҫем хуралчӗҫ,
Капансем пек йӑтӑнчӗҫ.

Инкеке кӗтет канмасӑр
Кӳршӗ-аршӑ, пӗтӗм ял.
Вӗҫҫӗр-хӗрсӗр йӑпӑр-япӑр
Чупкалаҫҫӗ йӑлт та ялт.

Хӑшӗсем касаҫҫӗ вутӑ,
Шыв йӑтаҫҫӗ теприсем.
Пулмалла-ҫке пурте тутӑ,
Ҫунмалла кӑмакисем.

Чи малтан юр тӑтӑш ҫурӗ.
Юрӗ сурӑх ҫӑмӗ пек.
Малалла ҫуран ҫил тухрӗ,
Вӗҫтерет ҫӗр ҫумӗпе.

Ҫаç енне тӑман. Вӑл вирлӗ
Ӳхӗрет те ахӑрать,
Акӑш-макӑш, урлӑ-пирлӗ,
Урӑм-сурӑм ҫаврӑнать.

Ҫитмӗл ҫичӗ вӑр-хурахӑн
Шӑхӑрать те мӑръере
Хушӑран ырать пуль ахӑр,
Выҫӑ касӑлнӑн йӗрет.

Чан сассийĕ ялăн, хирĕн
Вĕçĕмсĕр кĕрлет паян.
Чан çапас йăла пур пирĕн
Ĕлĕкрен те авалтан.

Çул çинче этем мăнтарăн
Ун сасне илтсессĕн тен,
Ялалла килме пултарĕ
Çăлăнса вилĕмĕнчен.

Пуянсем инкек-синкексĕр
Ăшă кăмака çинче.
Пирĕн пек мĕскĕн телейсĕр
Аташать тăмансенче.

Чун сӳлет. Ним те курăймăн
Хуп-хура урамсенче!
Староста патакĕ майлă
Туйăнать тулти тĕнче.

Тем такамĕ шак! шаккарĕ.
Кантăк шăннă—курăнмасть.
Ырлăха пулан хыпар-и
Çак хăрушă çиллĕ каç?

— Эй, хуçа, тархасшăн кӳртчĕ! —
Терĕ халран кайнă сас.
Ун чухне ман тĕшмĕш пурччĕ.
Тем эсрелĕ? Мĕн тăвас?

Именетĕп, сăхсăхатăп,
Тăхăнатăп чаппана.
Такăнса ашса тухатăп,
Уçаймастăп хапхана.

Çил-тăманĕ сивĕ юрлă.
Пилĕк çӳллĕш пулнă кĕрт.
— Çакăнтан, çак тĕкме урлă
Каç, тăванăм, — тетĕп — кĕр!

— Вăйăм çук — тет. Эп ал-хапăл
Тасатап кĕреçепе.
Пӳртĕме хуллен кĕрет вăл,
Пичĕ-куçĕ йĕп-йĕпе.

Сар шинелĕ çĕтĕк-çатăк,
Çĕлĕкĕ çинче çăлтăр.
Хам шеллетĕп, шухăшлатăп:
Йывăр хурлăх курнă-тăр.

Вилнĕ пек тӳрех йăванчĕ
Урайне, пăру умне.
Сехрем хăпрĕ. Хыпаланчăк
Салтас теп урисене.

Епле тӳснĕ? Шăнса кайнă
Шăкăртах ботинкисем.
Хĕнпе хыврăм. Йĕтĕр майлă
Юнсăр хытă урисем.

Тарласа халран каятăн,
Аллине те урине
Юрпа лайăх лутăркатăн,
Сĕркелетĕп хур çуне.

Тăхăнтартăм та кăçатă,
Чаппанпа тата чĕркеп.
Аса илтĕр хăть ăçта та
Шур сухаллă старике!

Пĕр пĕччен ăна çĕклерĕм
Хускатса ват шăм-шака.
Пултăр ман тўшек-минтерĕм
Тутлă ыйăх паракан!

Манăн кĕçĕн савнă ывăл
Хĕрлĕ Çар ĕретĕнче,
Тен тўсет пуль вăл та йывăр
Эп пулман вырăнсенче.

Çывăрать этем. Куççулĕм
Вăранать куçăмсенче.
Кăтра çўçлĕ. Унăн çулĕ
Çитейнĕ-ши вунçичче?

Çывраймарăм. Кăшт çуталчĕ.
Çитнĕ ĕнтĕ ирхине.
Пĕçерме хушап икерчĕ
Вăратса кинĕмсене.

Килĕмре тĕрĕс-тĕкеллĕ.
Хăпарса сентре çине
Кĕрĕке сарса йĕркеллĕн
Выртрăм эпĕ ирхине.

Кăтăш çеç пулас пăртакçă
Тенĕччĕ, вăрантăм та:
Çаплипех çилсем улаççĕ,
Çаплипех тăман тулта.

Хутнă кăмака хăвачĕ
Кăмăллă, вĕри те мар.
Тарилкке тулли икерчĕ,
Тата çутă сăмавар.

Вăранать те, йăлт-ял' шухă
Хăвăртах сиксе тăрать.
Тĕркĕшни те йывăр шухăш
Утнинче те курăнать.

— Çĕтĕкрех хресчен тумтирĕ
Тупăнмĕ-ши сирĕн? — тет.
Çитмĕл саплăклă тум пирĕн
Туллиех килте, çитет.

Эп сисетĕп: кўршĕ-аршă
Пĕлесрен хăрать иккен.
Лайăх пулмĕ тетĕп хамшăн,
Ўкĕ пуç çине инкек.

Пытаратпăр эпĕр унăн
Тумтирне тĕпсакайне,
Тăхăнчĕ çĕр саплăк хунă
Шурăм-пурăм киввине.

Анатри кĕтӳçĕ Сантăр!
Каснă-лартнă çавăн пек.
Акă шăлапир сăхман та
Улача йĕмпе кĕпе.

Хире-хирĕççĕн ларатпăр,
Тарласа ĕçетпĕр чей.
— Вилĕме — тет — парăнмасăр
Тупрăм — тет — кунта телей.

Хăй иккен Хусан таврашĕ,
Çарăмсен хĕррисенчен.
Пур мĕн амăшĕ те ашшĕ,
Шăллĕсем те килĕнче.

Пурăнтăмăр пĕр тăванăн
Шăкăл-шăкăл калаçса.
Таврана йăлтах хуплană
Пур енчен те шурă çар.

Канăççăр, йăлăхтармалăх
Виçĕ тавлăк шавласан,
Уçăлчĕ хайхи çанталăк,
Иртрĕ тăвăллă тăман.

Выçăхса аптранă кайăк
Тин тухать картасенчен,
Пăнтăхнă пӳрт хыççăн лайăх
Сывласси урамсенче.

Картана çӳлтен сăланă
Кĕртсенчен тасатнă чух,
Павăнчĕ ăш-чикĕм манăн,
Именсе сӳлерĕ чун.

Сĕрлесе каять çан-çурăм,
Кĕреçе алран ӳкет.
Çĕр çăтманĕ, темле юрă —
Кĕрлени илтĕнкелет.

Салтаксем хĕçлĕ-пăшаллă
Курăнаççĕ пĕлĕт пек,
Малтисем пурте лашаллă,
Пехотсем йĕлтĕрсемпе.

Мĕн тăвас? Хăрушă литĕ
Вăркăнатăп хам пӳрте.
Манăн çыннăн шурнă пичĕ,
— Хăвăртрах пытарччĕ — тет.

Ним тума та аптăрарăм.
Çыхнă пек алăсене.
Çавăнтах мел тупрăм: — Арăм,
Ӳç-ха, — тетĕп çӳпçене.

Хĕр чухне çĕленĕ тумĕ
Тăхăнман пек, кивелмен:
Йĕс нухратлă кĕпе умĕ,
Çут тенкĕллĕ шĕлкеме.

Чĕрçитти те пурçăн тутăр,
Анлă аркăллă кĕпе.
Кун пек лайăх хĕр те çуктăр
Таврара, пур ялĕпе.

Мăйăхĕ кăштах пăт-патăн
Мамăк пек шăтнисене
Çĕçĕпе хырса яратăп, —
Йлтĕр, — тетĕп, — хĕр тĕсне.

Кĕнчеле, тата турашăл
Тыт та, — аллăна йĕке.
Кунĕпе арла тархасшăн
Çиппине чĕрке-чĕрке.

Шуррисем пырса кĕреççĕ
Ман пата та хваттере,
Куç илмесĕр пăхкалаççĕ
„Ларма килнĕ сар хĕре".

Сăмахран, пĕлме пулсассăн
Арçынне хам паллăп-и?
Калаçни те çинçе саслă,
Чăн-чăнах ĕнтĕ Нарспи.

Уткаларăш хĕр-ипраçăн,
Тутине чăмăр тытать.
Уçăлас тесе пăртакçă
Кулленех шыва каять.

Шуррисем ялтан каяççĕ,
Таврара, пур ялĕпе
Отрядсем çаплах тăраççĕ,
Хупăрлаççĕ ункă пек.

Хĕрсене — тет — мăшкăл тунă,
Çакнă — тет — хресченсене.
Çакăн пек хыпар йăлт тулнă,
Илткелетĕп кулленех.

Канăç каччăсем памаççĕ,
Ман киле кĕре-кĕре
Темĕнле те илĕртеççĕ
„Питĕрех чипер хĕре“.

Ывăç-ывăç çитереççĕ
Сарă мăйăр кăлăхах,
Çырусем çырса чĕнеççĕ,
Йыхăраççĕ улаха.

Ахалех пăхса ларатăп
Кантăк умĕнче пĕрре,
Ăнсăртран хайхи куратăп
Шыв çĕкленĕ хам „хĕре“.

Пре мĕк пек тĕслĕ кăçатă
Тахăннă йĕкĕт тăрать,
Вырăнтан куçа, куçа та
Явăнать те явăнать.

Çак хăюллă вĕçкĕн каччă
Хĕрпеле тан çум-çумах
Варттăн юр йăтса пыратчĕ,
Тытăнчĕ питне çума.

Витрине лартать „ларма хĕр“,
Ывăннă пекех, анчах,
Ак сасартăк систермесĕр
Пилĕкрен тытать каччă.

Вăркăтрĕ. Каччи мăнтарăн
Пашт! пытанчĕ кĕрт ăшне.
Юр çемçе те кĕрчĕ тарăн, —
Ан та курăн çын куçне!

Манăн çыннăн чапĕ кайрĕ.
Çакăн пек пыра-киле
Тепĕр чăкăлтăш хыпарĕ
Ансăртран çитет киле.

Микуне пуян Иванĕ
Вăрлас тет иккен „хĕре“.
Пулĕ, пулĕ — вăл хăтланĕ.
Пыл-сăри тет хатĕрех.

Урама та кăлармастăп,
Асăмран тухмасть ялан.
Ут кÿлетĕп, ăсататăп
Вăтăр çухрăмри яла.

Пурнăç курнă ман пек ватă
Шанчăклă çын пуçана.
Каласа ăна паратăп:
— Сыхлăн — тетĕп — пуçăма.

Ик эрне иртет. Ларма хĕр
Ваттисен йăлисене
Ыр сунса та тиркемесĕр
Ларма тивĕç виç эрне.

Çуркунне хĕрте пуçларĕ.
Çÿлĕ ту тăрри хура.
Ушкăн-ушкăн кар-карларĕ
Карăнса хура курак.

Юр тумне сăртсен лапамĕ
Вĕççĕр-хĕрсĕр хывнăçем
Хăпарать тĕнче илемĕ.
Шăхăраççĕ шăнкăрчсем.

Тутлă ыйхăлă куç-пуçăм.
Сикрĕм-тăтăм эп пĕрре.
Кĕмĕл тĕслĕ шурăмпуçĕ
Карăнать тин пĕлĕтре

Çĕр чĕтрерĕ. Ыйхă тупăн?
Уçă сывлăшпа пĕрле
Акă тупă хыççăн тупă
Ухĕрет те кĕр-кĕрлет.

Пулемет татти-сыпписĕр
Калаçса тăрать кăна.
Ўкрĕ тупă. Ту çинчи çĕр
Алтăнать те вăркăнать.

Пулясем пĕр май иртеççĕ,
Шăхăраççĕ ши! те ши!
Хăш тĕлте çуртсем çунаççĕ
Сывлăшра ĕнĕк шăрши.

Хăраса кăна пăхатăп
Çурăк витĕр урама,
Шуррисем-çке шăтăр-шатăр
Тытăннă пурте тарма.

Утлисем вĕççе иртеççĕ,
Çил çитеймĕ хыçалтан.
Такăнса ўксе пыраççĕ
Пехотсем аран-аран.

Пулемет-и, е хутаç-и,
Суранланнă-и лаша, —
Парахаççĕ те чупаççĕ
Сĕлтĕшлĕ юра ашса.

Ирхине ирех — кĕреççĕ
Хĕрлĕ паттăрсем яла.
Кăмăллă çилсем вĕреççĕ, —
Вĕлкĕшет хĕрлĕ ялав.

Хаваса уçса пама хĕн.
Тасататăп хам киле.
Çуранах хайхи „ларма хĕр"
Пуçана панчен килет.

Хăпăл-хапăл кăларатăп,
Якататăп тумтирне.
Тĕпĕнчен илсе касатăп
Çивĕтленĕ сар çӳçне.

Ашшĕ пек пĕрле каятăп
Хĕрлисен штабне, шала,
Командир умне тăратăп
Сухала шăла-шăла.

Вăл ыйтать: „Епле вилмерĕн?"
Манăн савнă çыннăмран.
— Çакă — тет — вилме памарĕ —
Лăпкаса ман хулăмран.

Урамра пуху шавларĕ.
Ялавсем — хĕрлĕ вăрман.
Аллине сулса каларĕ
Çывăх çыннăм, тусăм ман.

— Пирĕнпе — тет — пĕтĕм халăх
Кăкăрпа тăрать ялан.
Çил çинче вĕçет хаваслă
Хĕрлĕ тĕслĕ — тет — ялав.

Ман çинчен нумай пуплерĕ,
Эх, каларĕ тем те тем.
Ман çине алне тĕллерĕ:
— Акă—терĕ—вăл этем.

Параппан çапса йăтаççĕ
Çĕлĕк хыççăн çĕлĕке:
— Вăрăм ĕмĕр пултăр!—теççĕ;
— Урра—теççĕ—старике.

Тусĕсем параççĕ алă,
Тĕлĕнсе каяççĕ шалт.
Командир пырать хаваслă,
Тыттарать мана пăшал.

Командир чĕлĕм кăларчĕ,
Тапак хучĕ те ăшне,
Йăл кулса мана тыттарчĕ:
— Акă—тет—сана парне.

Иртрĕ çирĕм çул. Пĕлместĕп:
Е нумай-и, е сахал.
Вата иккенне сисместĕп,—
Шуралать кăна сухал.

Манăн туслă çын манмарĕ,
Пĕр май тăчĕ пĕлтерсе.

Хӑнана килсе те кайрӗ,
Кӑмӑл турӗ пӗлтӗр ҫеҫ.

Пулӑшни нумай та питӗ,
Пӗтерес ҫук калаҫса.
Тенкӗшер сарсассӑн, ҫитӗ
Ҫичӗ ҫухрӑма укҫа.

Этемми ытла та ырӑ,—
Вӑрӑм пултӑр ӗмӗре!
Ахальтен хисеплӗ вырӑн
Илеймӗччӗ чикӗре.

Тилхепелӗх пӗтӗреп-и
Е хире тухса каяп,
Чӗлӗме туртатӑп эпӗ,
Сӑвӑратӑп пӗрмаях.

Асӑмра хавас кӗрленӗ
Параппан сассиллӗ ир,
Асӑмра ялав ҫӗкленӗ
Хулӑм хуллӑ командир.

*1939*



## ТӐВАТТӐМӖШ КАЛАВ

Ҫуркунне ӑшӑ хыпарлӑ
Вӑранса ҫемҫен килсен,
Ҫитрӗҫ лапсӑркка сухаллӑ
Утлӑ урнӑ казаксем.

Килӗнте ҫӳрет автан-и,
Какалать-и, шурӑ хур,—
Ҫӗҫӗ вырӑнне наганӗ
Ҫумӗнче казакӑн пур.

Хӑй кӳртсе парать. Пӗҫерӗр!
Уншӑн хатӗрлӗр тукмак!
Пуҫ чиксе хресчен ҫӳретӗр!
Ҫавӑн пек иккен казак.

Калӑпӑр: пур санӑн арӑм.
Вӑл ҫӗрле ун ҫумӗнче.
Карӑш пек пӑхса ху ларӑн
Аякрах, сентре ҫинче.

Нихăçан курайман урă.
Яланах ханша, эрех.
Ӳхĕретчĕ ӳсĕр юрă
Урам тăрăх вĕççĕрех.

Ирĕкри вăкăр усаллăн
Çĕр чавать те мĕкĕрет,
Лапсăркка вăрăм сухаллă
Казаксем çине кĕрет.

Урнăçем, çилленнĕçемĕн
Сирпĕтсе сĕлекине,
Ăнсăртран сиксе тӳрех мĕн
Хупăрлать пĕр казакне,

Çĕклесе илет çиллеслĕн,
Икĕ мăйраки çине,
Урлă-пирлĕ, каллĕ-маллĕ
Пăтратать пыршисене.

Çиччĕн-саккăрăн ывтаççĕ
Вăкăра хĕçпе кассах.
Хăйсемех лăх-лах кулаççĕ.
Çавăн пек иккен казак.

Кĕлтума вĕсен пуп пурччĕ.
Кашта çӳллĕш. Яштака.
Мировойччĕ. Пуп тăк пупчĕ!
Пĕр çиет те—çук така.

Пӑлханма пуҫланӑ, теҫҫӗ,
Пирӗнпе пӗр кӳршӗ ял.
Ӳкӗте кӳртме яраҫҫӗ
Ҫавӑнпа пупа паян.

Пуп ҫуни ҫемҫе кӗҫҫелле,
Шӑнкӑравӗ пӗкӗре.
Катаччи чупмашкӑн мелле,
Хӑнана кайма хитре.

Хушрӗҫ. Эпӗ пултӑм лавҫӑ.
Тем те тӑвӗҫ леҫмесен.
Ҫӗленсем пек авӑнаҫҫӗ
Ӑтӑр пек хура утсем.

Пӗр пӗччен ҫеҫ шӑнӑҫмалӑх
Тупӑннӑ ҫуна пупа.
Пашкаса ларать ҫухаллӑ
Упа тирлӗ тӑлӑппа.

Ларкӑҫ ман сӑран минтерлӗ,
Вӗтӗ явнӑ тилкепе.
Пар лаша чупать типтерлӗ,
Ярӑнса шыв юхнӑ пек.

Каҫ та пулчӗ. Сарӑ уйӑх
Тин пуҫларӗ хӑпарма.
Хыҫала юлать ял уйӗ.
Малалла каять вӑрман.

Шăп кăна. Таçта пĕр ӳхĕ
Çуйăхни илтĕнкелет.
Сехремет кунта. Чун тухĕ.
Тем те пур-тăр? Кам пĕлет?

Тен çӳрет пуль пĕр-пĕр таркăн.
Шăхăрма та хăяймăн.
Çывăрать эрехлĕ лакăм—
Ӳсĕр пупăм, хăямат.

Тарăхтарчĕ, йăлăхтарчĕ
Шăнкăр-шăнкăр шăнкăрав.
Сирпĕтсе кăна ярасчĕ,—
Лăпланĕччĕ çак шăв-шав.

Каялла чакса сасартăк
Хартлатаççĕ лашасем.
Сывламасăр эпĕ лартăм,
Вирелле тăчĕç çӳçсем.

Ик енче пире хуплана
Вутпуççи пекех куççем.
Вилĕм çитрĕ—тетĕп—манăн:
Пĕр кĕтӳ выç кашкăрсем.

Шăхăрса кăна яратăп.
Сас каять вăрманĕпе.
Уртăнса карт-карт туртатăп,—
Хăть татăлтăр тилкепе!

Шилесе вылять чĕн пушă.
Тапса сикрĕç лашасем.
Манса кайнă эп хăрушă
Иккенне те юн хĕрсен.

Куç уçса пăхма та йывăр,
Çил сасси хăлхасенче.
Иртрĕ йывăç хыççăн йывăç,
Курăнчĕ ял сăрт çинче.

Чарăнатăп. Хуйха тупрăм.
Ӳксе юлнă манăн пуп.
Чарăнмасăр пилĕк çухрăм
Кайнă эпĕ. Кай та туп!

Хурăнташ патне кĕретĕп,
Çитеретĕп утсене.
Çывăрмасăр именетĕп.
Кăвакарчĕ ирхине.

Кӳлтĕм те киле каятăп.
Ăш пăшать. Çунать чĕре.
Каймасассăн та хăратăп,—
Çĕмĕрĕç çурта-йĕре.

Виçĕ кинĕм курĕç хурлăх.
Мĕн тăвас ĕнтĕ паян?
Эп тарсассăн, манăн урлă
Кĕлленсе çухалĕ ял.

Хам вилсен те... Эпĕ ватă.
Вăрмана кĕрсе çитсен,
Ĕнерхи çĕрте куратăп
Çивĕтлĕ çӳç, сукмаксем.

Шпорлă мăшăр ату юлнă,
Ашĕнче пуп урисем.
Шăмăсем. Хĕрес. Юр юнлă.
Тăлăпăн татăккисем.

Юр çинчен шăла-шăла
Мĕн пурне лава хуратăп,
Юрттаратăп хам яла.

Çитрĕм те анма хăрагăп.
— Пирĕн пуп ăçта?—тесен,
Кăтартатăп мăшăр атă:
— Çинĕ—тетĕп—кашкăрсем.

Казаксем сана ĕненĕç,
Ӳкĕтлеймĕн калаçса.
Пушăпа вĕтсе хĕнерĕç,
Тапса хупрĕç чул лаççа.

Ыратать суранлă çурăм.
Хыт ислетнĕ, киремет.
Тулалла пăхма çук çурăк.
Сăрăлтатрĕ пулемет.

Тем пулать? Ухлатрĕ тупă.
Ут таканĕ сассисем.

Ман умра выртаççĕ пупăн
Çӳçĕсем те аттисем.

Кăнтăрла иртет-и? Каç-и?
Вăхăт вăрăм туйăнать.
Çĕмĕрет такамĕ. Лаçăн
Алăкĕ яр уçăлать.

— Тух кунтан! Вилмен-и эсĕ?
Хĕрлисем ялта. Телей!
Эпĕ тухасса кĕтмесĕр
Килчĕ кĕчĕ Уртемей.

*1939*



## ПИЛЛЁКМЁШ КАЛАВ

(*Кӗлпук мучи Кара-Ахмет агайпа калаҫни*)

Хуш бул, Ахмет агай, кунакӑм,
Мӑнда буласӑн бик сирек*.
Пичке тулли сӑра пылакӑн
Йӳҫсе тахҫан кӗтет сире.

Ҫул хыҫҫӑн ҫул хуллен ҫеҫ шурӗ.
Йӗпкӗн хураччӗ иксӗмӗр.
Кӗр ӳкнӗ юр пекех чӑлт шурӑ
Ҫӳҫсем пуҫа тиерӗмӗр.

Чылай кӗскелчӗ пирӗн утӑм,
Ярса пусма ҫук ҫур хӑлаҫ.
Анчах пире, юратнӑ тусӑм,
Вилме ҫапах та юрамасть.

Курас пулать, сӗвек кӗперӗ
Ту урлӑ карӑнса ӳксен
Кӑвакӑн, симӗсӗн, чиперӗн
Епле шавлаҫҫӗ тырӑсем.

---

* Сыв пул, Ахмет пичче, хӑнаҫӑм.
Кунта пулатӑн пит сайра,

Курас пулать хăмла чечекĕ
Хурамана явăннине,
Ĕçес пулать çапла чеченĕн
Ларса хăватлă сăрине.

Кăмăл килсен, Абдул иптешĕм,
Калаçмасан аван та мар,
Чĕлхе тени çемçе пуплесшĕн,
Пуласшăн уçă та юмарт.

Хăвах пĕлетĕн: пулкаланă,
Çӳренĕ эпĕ ялăрта,
Тутар юррисене юрланă,
Юраткаланă та пăртак.

Ун чух ту хĕрринче сан пӳртчĕ.
Тăм витнĕ, астăватăн-и?
Вунçиччĕри хĕрӳ сан пурччĕ.
Вăл ман варличчĕ, ман савни.

Пит çăмарти шупка чиперччĕ,
Çурхи каç уйăхĕ пекех:
Ялта Зейнаб тесе чĕнетчĕç,
Эп хунă ячĕ: Айбике*.

Эпир унпа пĕрле йăлт уçă
Каçра çӳренĕ иксĕмĕр:

* Айбике—уйăх хĕрĕ.

Мана пăхатчĕ икĕ кусĕ,
Мана пăхатчĕ ик çĕмĕрт.

— Качча мана пыратăн, чунăм!—
Тесе тўлек çĕмĕртлĕхре
Ыталаса нумай чуптунă
Çеçке пек сирĕн хĕрĕре.

— Тутар тĕнне кĕрсен, тин эсĕ
Пулатăн,—тетчĕ,—мăшăрăм.
— Чăнах, кĕрес-и те илес-и?—
Тесе шутлаттăм хушăран.

Айван ăспа шутлаттăм эпĕ:
Христос тĕне хисеплĕрех,
Генералсем ялан молебĕн
Тăваççĕ—теттĕм—чиркўре.

Патша та хăй икон чуптунă,
Пуппа ирттернĕ-çке венчет.
Мĕскер çурлаллă, чансăр тунă
Кăткă йăви пекех меччет.

Ирех пур кайăксем тăраççĕ
Минаретран*. Итлетĕр çын:
„Алла-екбер“ калать азанçă**
Шĕвĕр сухаллă мĕедзин***.

---

*) Минарет—мечет тăрри.
**) Азанçă—ирхи кĕлле калакан.
***) Мĕедзин—мулларан кĕçĕнни.

Шутлаттăм эпĕ килĕшӳсĕр:
Чиркӳ аван. Мункун çитсен,
Эрне хушши татти-сыпписĕр
Кĕрлеççĕ—теттĕмччĕ—чансем.

Хам ĕмĕрте нихçан пĕр пусăм
Пусман чиркӳ картинелле,
Курман-илтмен, юратнă тусăм,
Пĕлместĕп нимĕнле кĕлле.

Ыйха та канăçа вĕçетчĕ:
Юратасси çав каччă чух,
Зейнаб хĕрӳ ытла чиперччĕ,—
Çуна-çуна тӳсмерĕ чун.

Тутар тĕнне кĕрес те терĕм,—
Пулас çынсем пек мăшăрлă.
„Леш тĕнчере" çăтмах кĕперĕ
Мана ан йăттăр. Ан шарла!

Çатма çулам, вута кĕрем-и,—
Кĕллентĕр, вĕçтĕр манăн ӳт,
Анчах Зейнаб, Зейнаб илемĕ
Вăл манăн чунăм, манăн пӳрт.

Вăрлас та шухăш пурччĕ манăн,
Каларăм хамăн туссене,
Анчах вĕсем пурте хăрана,
Мана ятларĕç илтсенех.

— Усал лаша вӑрри ун ашшӗ,
Туртийӗ,—теҫҫӗ,—пит кӗске.
Яла пӗтерӗ таварӑсшӑн,
Ҫаратӗ вӑл, ҫиленнӗскер.

Хӗр илесси—начар хуткупӑс,
Епле туртсан та—каламасть.
Шӑлтах аптрарӑм. Ху туп ӑс!
Никам та ним те шарламасть.

Хайхи-майхи кивҫен ҫут атӑ
Илсе пӗрре тӑхӑнтӑм та,
Хӑюллӑн ялӑра утатӑп,
Тӳрех кӗретӗп сан пата...

Сӑлтавсӑр умӑнта ларатӑп
Чӗрӗп ҫинчи пекех аран.
Тӗне кӗрес пирки калатӑп,
Хӗрӳ пирки те хушӑран.

Пыра-киле: „Нумай-и хулӑм?“—
Сӑмах уҫма ҫеҫ ӗлкӗрсен,
Шутларӑм: „Тупрӑм,—терӗм,—хурлӑх“.
Хаяр вылянчӗҫ куҫусем.

— Килтен ҫухал, киревсӗр гефӗр!*—
Тесе эс тӑтӑн вырӑнтан—
Ҫураҫ, чӑваш, ҫураҫ кунта хӗр!—
Сулмаклӑн патӑн хӑлхаран.

* Гефӗр—урӑх тӗнлӗ ҫынна тиркесе калани.

Куçран вут сирпĕнчĕ. Васкарăм.
Пÿртрен тухас та сирпĕнес.
Шĕвĕр пÿрнÿпеле юнарăн:
— Асту, кăтартăп!—терĕн эс.

Хăвалăх витĕр хăшкăл-хашкăл
Вĕçтертĕм хамăн килĕме.
Кайран ăçта хĕрне курмашкăн,
Хăратăп ялăра кĕме.

Çапла авал, Ахмет-агайăм,
Хуçса пăрахрăн кăмăла
Таван хĕрне çунатсăр кайăк
Туса хăварчĕ кив йăла.

Астабикке*, тăватмĕш арăм
Пулса йÿтенĕ ват муллан,
Хăвăн ачу Зейнаб, мăнтарăн,
Ĕмĕр тертленчĕ пулмалла.

Туй хыççăн укçуна эс сурăн,
Хуса эс кĕтĕн ирхине
Тăват тĕве те çирĕм сурăх
Çатан тыттарнă килкартне.

Анчах, Ахмет-агай, манмарăн,
Этем пÿрленнĕ çăпанне
Усранă пек ĕлĕк усрарăн
Мана юнанă вĕччÿне.

---

* Астабикке – муллан кĕçĕн арăмĕ.

Ҫӗлен пек йӑпшӑнса сыхларӑн,
Йӗрлерӗн утӑмран мана.
Пӗрре, выртма кайсан, вӑрларӑн
Пӗртен пӗр манӑн лашана.

Эрне хушши эпир тӑваттӑн,
Эпир—тӑватӑ юланут—
Йӗрлерӗмӗр. Анчах эс паттӑр,
Вут витӗр тухнӑ ҫичӗ ют.

Эпир начаррисем те марччӗ,
Кӗреш  пек анлӑ кӑкӑрсем.
Эх, сӑвӑрсем пек шӑхӑратчӗҫ
Хӑлхасенче хирти ҫилсем.

Ахмет-агайӑм, тараймарӑн!
Ӗренпура ҫитес ҫӗрте
Ҫапса ӳкерчӗ ман чукмарӑм
Сана сӑран йӗнерӗнтен.

Ал-уруна ҫыхса чӗп майлӑ
Илсе ҫитертӗмӗр яла.
Ку вӑхӑта нихҫан манаймӑн,—
Асна килет пулас ялан.

Ҫумна ҫакса янравлӑ питлӗх
Урам тӑрӑх ҫӳретрӗмӗр.
Камсем ҫиллес, камсем вӑй-питлӗ,—
Пурте сана хӗнерӗмӗр.

Çамку çинче халь те пĕр паллă,
Пӳрне выртмалăх вырăн пур.
Ăна тивретнĕ манăн ала,
Чулпах çапма та тивнĕ, мур.

Ахмет-агай! Ăнна çухатрăн
Ытла тискер хĕненипе.
Вилех!—тесе сана пăрахрăм
Пăр янă сивĕ нӳхрепе.

Ирех тăрса тухса пăхатăп:
Нӳхреп пуш-пушă, сансăрах.
Кайри пахчаналла пăт-патăн
Юн юхнă йĕр выртать ярах.

Упаленсе чун-халлĕн тарнă,
Кайма пултарнă, хăямат.
Вăйлă ӳтӳ тăварлă тарлă,
Çапах вилме те хăяйман.

Паян аса илсе кулмашкăн,
Ахăлтатма тивет пире.
Эс пулнă маншăн сăрă кашкăр,
Эп те çаплахчĕ, пурпĕрех.

Пĕрне-пĕри çĕре чикесшĕн
Епле кăна-ши тăрăшман?

Тӗлӗнмелле, шуйттан илесшӗ,
Пӗр пек ҫынсем, анчах тӑшман.

Пире пӗр пек хавасла турӗ
Хальхи саккун кӗнекинче.
Ҫӳлте, ҫӗр ҫийӗнче пӗр турӑ,
Турри те хамӑр вӑйсенче.

Чӳречерен кӑштах пӑхсамӑр:
Вӑрман, тусем, уй-хир те шыв.
Хуҫа пулса тӑратпӑр хамӑр,
Куҫсем пек хакланать ҫӗршыв.

Хӑван куҫна епле вӑрлайӑн?
Вӑрла! Умран ҫухалӗ ҫул.
Ӗҫлетӗн эс вӑю пур тайӑн.
Пурте ҫитет. Вӑрлас та ҫук.

Халь ак пулсассӑн ҫамрӑк каччӑ,
Мана савсассӑн Айбике,—
Авланасси ҫӑмӑл пулатчӗ
Ҫурхи шыв юхӑмӗ пекех.

Ун чух, агай, хӑвах пыраттӑн
Машин ҫине лартса хӗрне,
Урусене хуҫса лараттӑн
Ман умӑма, кӗҫҫе ҫине.

Курка йӑтар калаçнӑ майӑн,
Ĕçер те тӳнтерер уйтан.
Эйде, Ахмет-агай, йӑрлайӑк
Акидел буйӑ турӑнда!*
*1939.*

---

* Айта, Ахмет пичче, юрлатпӑр
Шуратӑл улӑхĕ çинчен.



## КЕЛПУК МУЧИ МУНЧА КЕРЕТ

Вунтӑватӑ ҫивӗч пуртӑ
Платниксен аллисенче
Ик эрне хушши те пур-тӑр
Кӗрленай вӑрманӗнче
Вӗҫсӗр-хӗрсӗр янтӑрарӗҫ.
Тек хумханчӗҫ сасӑсем.
Шӑрчӑксем пек сиккелерӗҫ
Ҫункавсем те турпассем.

Ӗмӗрсем хушши кашланӑ
Яштака йывӑҫсенчен
Ҫырласен шӑрши хупланӑ
Пӗр уҫланкӑ варринче
Шуралса хӑвӑрт ҫӗкленчӗ
Хитререн хитре пура.
Пӑхрӑмӑр та, тӗлӗнтерчӗ,
Савӑнтарчӗ хамӑра.

Тӗрлӗ юрӑсем нумайӑн
Янтӑратчӗҫ кайӑксен,

Улăхра ытла та лайах
Авăтатчĕç куккусем;
Питĕрех аван, чиперччĕ,
Пултăран яшкилĕ ир!
Ир-ирех эпир кĕтменччĕ—
Килсе çитрĕ бригадир.

Юланут çинчен вăл анчĕ,
Пăхрĕ те пура çине
Пĕр сăмахсăр йăл-йăл кулчĕ
Алпа[illegible]а платниксене.
Перенесене карт-паллă
Хыва-хыва пĕтерсен,
Килсе çитрĕç пар лашаллă
Шăлтăрти урапасем.

Пурана сӳтсе тирпейлĕ
Пĕтĕмпе тиерĕмĕр.
Пултăрччĕ мунча шерпетлĕ!—
Тесе яла килтĕмĕр
Сарлака çырма çыранĕ
Хĕрринче мăкларăмăр.
Ырнă çыннăн ӳчĕ канĕ,
Ăнăç патăр вăйăмăр!

Часăрах та кăпăр-капăр
Хатĕрлес! Тӳсмерĕ чун.
Кăмака валли пухатпăр
Çырма тăрăх вĕтĕ чул.
Хăвăртрах мунча та пултăр,

Хĕрсе хытă çунтăр вут!
Вунтăватă çивĕч пурта
Янтăрарĕç тепĕр хут.

Районра пире мухтанă,
Çавăнпа та хуларан
Машинпа колхозшăн янă
Акăш-макăш пĕр хуран.
Кĕчĕ те чи çўлĕ Сантăр,
Курăнмарĕ, тупата!
Вунă такана ярсан та,
Пиçĕ ирĕккĕн унта.

Терентей мучи кăларчĕ
Мунчанне кăмакине,
Хăй ятне çырса хăварчĕ
Пысăк кирпĕчĕ çине.
Мĕн тăван? Мучи ăстаçă—
Кăмака кăларакан,
Ун кăмакисем çунаççĕ
Çирĕм çул та ытларах.

Пўртсене ăшă тытаççĕ,
Упăраççĕ вутăран,
Пĕр пăсмасăр пĕçереççĕ
Темĕн тĕрлĕ çăкăра.
— Çунĕ çакă кăмакамçăм
Хĕрĕх çул—вара телей!—
Эпĕ суймăп—тет ăстаçă
Шурă çўçлĕ Терентей,

* * *

Ирхинех, хĕвел тухманччĕ,
Хăшĕ ăшă ыйхăра,
Кăн-кăвак тĕтĕм хăпарчĕ,
Мăкăрланчĕ çырмара.
Çĕн чулсен те, йывăçсен те
Таврана шăрши каять.
Ĕнер çеç мунча кĕрсен те—
Ӳт кĕçĕтнĕ пек туйăнать.

Лав тулли илемлĕ милĕк
Касса килчĕç вăрмантан.
Лавĕ çуркунне шăршиллĕ,
Шăршине туйма аван.
Кашниех пĕр мăшăр милĕк
Илтĕр çакă лав çинчен,
Çапăнтăр, тарлатăр вирлĕ
Сарлака лапка çинче.

Уй-хире вăй-халлă кайтăр,
Юн шавлатăр ӳтĕнче,
Пĕрлĕхен пек тĕс вылятăр
Тап-таса пичĕсенче.
Ывăнсан, тусанлă кирĕк
Ут-тирне ларсан кăна,
Икĕ хурăн милĕк кирлĕ—
Тӳрĕ уттăр мунчана.

Çĕнĕ мунчана уçмашкăн,
Чи малтан ăшши пама,

Чи пуçламӗш çапӑнмашкӑн.
Çӑл шывпе ӳтне ухма
Чӗлӗмне хыпса телейлӗн
Çӑмӑллӑн анать Кӗлпук,
Колхозра ун пек хисеплӗ,
Ун пек ватӑ урӑх çук.

Мунчара ытла сулмаклӑ
Мӑшӑр милӗке илет:
— Чулӑмсем, кӗрлӗр хӑватлӑн,
Хытӑ шавлӑр, чашлӑр!—тет.
Çавӑнтах сӑмахӗ майӑн
Виçӗ хут пӗр куркашар
Шыв сапать,—чулсем нумайӑн
Шартлатаççӗ шӑрт та шарт!

Ӗнтнӗ пек иртет вӗриллӗн
Хӗрнӗ сывлӑш пуç çинчен.
Кӗлпук тытнӑ мӑшӑр милӗк,
Хӑй выртать лапка çинче,
Урине йӑтса, канмасӑр
Акӑш-макӑш çапӑнать,
Хушӑран туйӑри пек харсӑр
Кӗвӗлет те такмаклать:

„Йӳççе тула хӑвалар,
Ӑшши пултӑр хамӑран.
Тӗрӗс те мар, суя мар—
Лапка ылттӑн хӑмаран.
Çурӑм тӑрӑх милӗксем

Епле шурĕç—пăхăр-ха.
Çапăнса кунта вилсен,
Ан кулянăр! Ах-ха-ха!"

Йăлт сиксе тăрать, ал-хапăл
Сив шывпа пуçне ухать,
Тăхăрвун çулта чылай вăл
Курнă мунча тутине,
Пин-пин ешĕл хурăн милĕк
Ачашланă ун ӳтне,
Çăлкуç шывĕ панă пиллĕх,
Вăрăмлатнă ĕмĕрне.

Ак каллех те милĕк илчĕ,
Тепĕр хут ăшши парать,
Канăç тупнă вăтă ӳчĕ
Хур яшки пек пăсланать.
Çаврăнса выртать. Ват алă
Çаплипех çатлаттарать.
Çапăнма вăй-хал памалăх
Çĕнĕрен такмак калать:

„Умăртан сирсе хăварăр
Çитмĕл çичĕ чир-чĕре,
Милĕкпе çапса тасатăр,
Çирĕплетĕр ӳтĕре.
Çĕр çинче çĕр çул пурнасчĕ,
Вилес марччĕ кăлăхах.

Ак çапла тек çапăнасчĕ!
Ах-ха-хах! Ах-ха-ха!"

Çапăнчĕ те сикрĕ, анчĕ.
Тӳсеймерĕ вĕрире,
Пуçĕ çиййĕнчен ак ячĕ
Сивĕ шыв—тулли витре,—
Çӳçенни те сисĕнмерĕ,
Хăнăхнă иккен мучи,
— Асатте! мана çап—терĕ
Кĕçĕн ывăлин ачи.

Килĕшет Кĕлпук. Вăй-халĕ
Çĕмĕрсе тăнă пекех,
Икĕ аллине те халĕ
Тытрĕ мăшăр милĕке.
Ача выртрĕ. Урлă-пирлĕ
Пирĕн Кĕлпук шăлкалать,
Çавăнтах мĕнле çеç кирлĕ
Çавăн пек такмак калать:

„Кăпăкран эп çыхрăм милĕк.
Çыххисем пурçăнсенчен.
Çулçисем ун пыл тутиллĕ,
Мунча чулĕ чăн мерчен.
Лайăх çавăнсан, тăванăм,
Эс хăрамăн кашкăртан.
Ӳсмелле каçчен те санăн
Кашта çӳллĕшĕ таран".

Ывӑнче Кӗлпук, антрарӗ,
Ахлатса сывлать кӑна,
Кӑлт-калт пусрӗ, тухса кайрӗ
Шампӑлт! сикрӗ ҫырмана.
Ватӑ ҫын та, пӑхӑр халӗ.
Пулӑ пек хӑвӑрт каять.
Кӑвапи таран сухалӗ
Икӗ енӗпе шӑвать.



## ТУПМАЛЛИ


**I. Ял хыпарĕсем** *Стр.*

Ашшĕпе ывăлĕ . . . . . . . . . . . . . . . . . . 5
Ĕпхӳ пасарĕ . . . . . . . . . . . . . . . . . . 14
Хăруша çĕр . . . . . . . . . . . . . . . . . . 23
Сăсар çĕлĕк . . . . . . . . . . . . . . . . . . 32
Туйра . . . . . . . . . . . . . . . . . . 44

**II. Кĕлпук мучи калавĕсем**

Пĕрремĕш калав . . . . . . . . . . . . . . . . . . 55
Иккĕмĕш калав . . . . . . . . . . . . . . . . . . 61
Виççĕмĕш калав . . . . . . . . . . . . . . . . . . 67
Тăваттăмĕш калав . . . . . . . . . . . . . . . . . . 84
Пиллĕкмĕш калав (Кĕлпук мучи Кара-Ахмет Агайпа калаçни) . . . . . . . . . . . . . . . . . . 91
Кĕлпук мучи мунча кĕрет . . . . . . . . . . . . . . . . . . 100



ЧУВАШСКАЯ КНИЖНАЯ ПАЛАТА г. Чебоксары Чувашской АССР



Редактор Стихван Шавлы

Подписано к печати 14—1—41 г. Печатных листов 3,375
4,3 уч. авт. л. Тираж 3000 экз. НТ 2371
Заказ № 626.

Отпечатано в тип. № 1 НКМП ЧАССР, г. Чебоксары.

Цена 2 р. 75 коп.

ЯКОВ УХСАЙ

# ДЕРЕВЕНСКИЕ НОВОСТИ

СТИХИ

ГОСИЗДАТ ЧАССР